Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 октябрĕн 15 ЕРНЕКУН. 237 (4749)-мĕш №

Пĕр №-рĕ 10 пус. *19-мĕш çул тухать.*

ЧĂВАШ КОММУНĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Дежурнăйăн 6—23, Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88

Хĕрарăм-суйлавçă—хăватлă вăй

Октябрĕн 12-мĕшĕнче пирĕн анлă та аслă талкишлĕ социалисăмла тăван çĕршывра ССР Союзĕн Аслă Советне Сталинла Конституци тăрăх суйламали суйлав кампанийĕ пуçланчĕ. Çак ответлă та пысăк ĕçе тума, çав вăхăтрах тата хаваслă та телейлĕ праçнике хатĕрленме ĕçе Совет Союзĕнчи пур граждансем те, партири тата партире тăман большевиксен массисем, йуратнă аннен—тăван çĕршывăн шанчăклă ывăлсемпе хĕрĕсем пурте хутшănаççĕ.

Совет çĕршывĕнче суйлава хатĕрленни—капиталисăмла çĕршывсенчи ултавлă суйлав кампанийĕсенчен пĕтĕмпех ăрасна. Капиталисăмла çĕршывсенче суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче—суйĕçтерни, хăратни, улталани алхассах кайаççĕ, буржуалă суйа — демократин чи хура йенĕсем уйрăмах вăйлăн палăраççĕ.

Капиталисăмла çĕршывсенче суйлав умĕнхи кампанире тара кĕрĕшнĕ агитаторсем сахалтарах ăнланакан рабочисене, безработнăйсене улталаççĕ. Унта хĕрарăмсене уйрăмах хытă улталаççĕ, мĕншĕн тесен капиталисăмла обществăри йурнăç условийĕсем хĕрарăма политикăла пурнăçăн тулашне кăларса пăрахаççĕ.

Пирĕн çĕршывра совет суйлавçи тата унăн халăх представительствинчи депутачĕ хушшинчи хутшăнусем пĕтĕмпех урăхла никĕс çинче тытăнса тăраççĕ. ССР Союзĕнче депутат—вăл ĕççыннисен ирĕкне, вĕсен совĕçне шанчăклăн пурнăça кĕртсе пыракан çын, общественнăçăн, гражданствăн образецĕ. ССР Союзĕнче—чăн-чăн демократилĕ çĕршывра—суйлав кампанийĕ политикăла пит пысăк шкул, пирĕн идейăлă ӳсĕмĕн çĕнĕ те çутă палăрăмĕ, социалисăмла государствăн управлени ĕçне, строительствине халăхăн çĕнĕ те çĕнĕ сийĕсем хутшăнса пыни пулса тăрать.

Суйлава хатĕрленни совет хĕрарăмне ĕçлеме пит анлă майсем уçса парать. ССР Союзĕнче хĕрарăм-суйлавçă — хăватлă вăй. Халĕ пирĕн халăх хуçалăхĕнче хĕрарăмсем тăхăр мĕлйун çынна йахăн ĕçлеççĕ, вăл ĕнтĕ пĕтĕм рабочисемпе служащисен виçĕ пайне йахăн пулать. Социалисăмла Аслă революци пулни 20 çул иртнĕ хушăра политикăла ӳссе пынă совет хĕрарăмĕ хутшăнса ĕçлемени, вăл хăйĕн ĕçне активлă сарса пымани социалисăм строительствинче пĕр участкă та çук. Унăн политикăла тата культурăлă ӳсĕмĕ совет йалĕнче уйрăмах тĕлĕнмеле палăрса тăрать, совет йалĕнче колхозницăсем çĕнĕ стройшăн хастарлă кĕрешекенсем пулса тăчĕç. Патша Российĕнче хĕрарăмăн пурнăçĕ тĕттĕм, пусмăрлă пулнă. Пусмăрта, нимĕнле правасăр пурăнса, вăл унчухне икĕ хутлă пусмăр: помещик-крепостник тата упăшкин пусмăрне тӳссе пурăннă.

Совет влаçĕ хресчен хĕрарăмне ирĕке кăларчĕ, ăна çутă пурнăç патне каймали сарлака çул уçса пачĕ, ăна упăшкине пăхăнса тăмала мар турĕ. Халĕ ĕнтĕ колхозницă хăйĕн ăраскалĕпе хăй хуçа. Хресчен хĕрарăмне совет влаçĕ, Ленин—Сталин партийĕ ирĕке кăларнă. Акă мĕншĕн ĕнтĕ вăл хăйĕн сассине хăйне тĕттĕмлĕхрен тата чуралăхран ирĕке кăларнă большевикла партине парать.

Капиталисăмла çĕршывсенче реакцилĕ вăйсем тĕттĕм, пусмăрта пурăнакан хресчен хĕрарăмĕсемпе хăйсен ĕçĕшĕн час-часах усă кураççĕ. Фашиссем ăна хăйсен усал та ирсĕр политикин орудийĕ туса хураççĕ. Совет çĕршывĕнче колхозницă-социалисăмла тăван çĕршывăн пĕр тан правалă, ăнланулă, ирĕклĕ гражданки.

Октябрĕнти Социалисăмла Аслă революци ирĕке кăларнă, çĕнĕ пурнăç çулĕ çине тăратнă совет хĕрарăмĕнчен хаваслăраххи, телейлĕреххи, мухтавлăраххи урăх кам пулма пултарĕ!

Пирĕн хĕрарăмсем, уйрăмах çамрăксем, революциччĕнхи йӳçĕ чуралăха, ĕмĕрхи катăргăна час-часах манса кайаççĕ, йе пĕртте астумаççĕ те. А вĕт çав капиталисăмла катăргă çĕр чăмăрĕн ултă пайĕнчен пилĕк пайĕнче халĕ те пур. Ахальтен мар ĕнтĕ, капиталисăмла çĕршывсенчи ĕççынни хĕрарăмĕсем Сталинла Конституцин 122-мĕш тата 137-мĕш статйисене савăнăçпа шанчăк куççулĕпе кĕтсе илеççĕ.

„**122 статйа.** ССР Союзĕнче хĕрарăм прависем хуçалăхăн, государствăн, культурăн тата обществăпа политикăн пĕтĕм пурнăçĕнче арçыннăнне пĕртан.

Хĕрарăмсен çав прависене пурнăça кĕртессин майĕ хĕрарăма ĕçлев, ĕçукçи парас, канăç, социалă страховани тата вĕренӳ тĕлĕшпе арçынпа пĕртан права панипе, амăшĕпе ача интересне государства сыхласа тăнипе, йăвăр çын хĕрарăма ĕçукçи тӳлесех отпуск панипе, ача йаçлисемпе сатсем нумай уçнипе пулса пырать.

137 статйа. Хĕрарăмсем суйлас тата суйланас правапа мĕн пур граждансемпе пĕртан усă кураççĕ".

Совет çĕршывĕнчи хĕрарăмсен пĕртан прави—вăл чăн-чăн пĕртан права, демократилĕ текен çĕршывсенчи политикăла демагогсен суйи мар, ултавĕ мар, хĕрарăмра унăн етемлĕх тивĕçлĕхне пĕтерекен, ăна тупă валли аш-какай хатĕрлекен машинă туса хуракан фашисла пуçкасакансен мăшкăлĕ мар.

Совет хĕрарăмĕ безработицăран, чухăнлăхран, упăшкисем, пиччĕшĕ-шăлнĕсем, ачисем çук пурнăçпа тата выçă пурнассинчен, çав пĕтĕм йăвăр асапсенчен ĕмĕрлĕхе хăтăлнă,—капиталисăмла государствăсенче çав йăвăр нушасемпе асапсем ĕççынни хĕрарăмĕсем çине тийенеççĕ.

Сталинла Конституци хĕрарăма ĕçлев прави, канăç правки, вĕренӳ прави пачĕ, социалисăм тăваканăн савăнăçлă, тулли пурнăçлă, çĕршывăн хастарлă гражданкин тата хăйсен ачисен телейлĕ амăшĕн правине пачĕ. Социалисăм çĕршывĕнче хĕрарăмпăн—ача амăшĕшĕн тăрăшаççĕ, ăна хисеплеççĕ. Ача çуратмали суртсене, йаçлĕсене, ача сачĕсене, шкулсене тыгса тăма государствă укçи-тенки питĕ нумай кайать. Çак строительствăн уссине совет хĕрарăмĕ хăй куллен курать. Социалисăмла çĕнĕ обществăн пĕртан правилă членĕ, фабрикри, заводри стахановкă, колхоз уйхирĕсенчи ударницă, культурă фронтĕнчи пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлекен работницă, общественницă, воспитательницă, йулашкинчен унăн сĕтне ĕмсе çитĕнсе хăйĕн тăван аслă çĕршывне йуратакансем, унăн шанчăклă ывăл-хĕрĕсем пулакан ачасен амăшĕ—совет хĕрарăмĕ коммунисăм тумали хăватлă вăй пулса тăрать.

Совет хĕрарăмĕн прависем питĕ пысăк, ĕç тумали майĕсем анлă. Çавăнпа унăн совет государстви умĕнчи обйазаннăçĕсем те, ответлăхĕ те пит пысăк. Ку тĕлĕшпе, çитĕнӳсем пайтах пур пулин те, çитмелĕхсем те сахал мар. Суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче пирĕн общественнăлă тата парти организацийĕсен хĕрарăмсем хушшинче политикăлă воспитани ĕçне нумай тумала. Хĕрарăма айакка тăратса хăварни капиталисăмла çĕршывсенчи суйлавсен характерлă палли,—вăл Совет Союзĕнче пулмала мар.

Суйлава хатĕрленмели вăхăтпа совет хĕрарăмĕ политикă тĕлĕшпе пĕлессине ӳстерме, унăн тавракурăмне анлăлатма усă курас пулать. Хĕрарăмсен йышлă массисем хушшинче тата уйрăмах вĕсен сахал ăнланакан, кайа тăрса йулнă, хăш чухне халĕ те-ха халăхшăн тăшманла елементсен, сăмахран, тĕне ĕненнипе усă кураканскерсен, тыткăнĕнче пулакан сийĕсем хушшинче агитацие пропагандă ĕçне вăйлатас пулать. Хĕрарăмсен çакăн пек ушкăнĕсем хушшинче парти организацисен политикăлă воспитани ĕçне вăйлă туса пырас пулать. Совет Союзĕн кашни гражданки хăйĕн тăван çĕршывĕн аслă çитĕнĕвĕсене пĕлсе тăмала. Хĕрарăмсем Сталинла аслă Конституцийе вĕренменни пирĕн анлă талкишлĕ çĕршывра пĕр кĕтес те пулмала мар.

„Пирĕн çынсем нумай йун йухтарни харама кайманнине, вăл хăйĕн результачĕсене панине пĕлме кăмăллă та, савăнăçлă... Çак вăл хамăр вăйсем çине шанассине çирĕплетет тата коммунисăмăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсене çĕнсе илме çĕнĕ кĕрешĕве мобилизацилет" (Сталин). Тулли хăватлă, çĕнĕрен паттăр ĕçсем тума хатĕр тăракан совет хĕрарăмĕ малашне çĕнтерӳсем тăвассишĕн вунă хут вăйлăрах кĕрешĕ, хамăрăн тăван çĕршыва тăшмансен хăтланăвĕсенчен тата тапăнăвĕсенчен çивĕччĕн сыхласа тăрĕ.

Декабрĕн 12-мĕшĕнче Совет Союзĕн гражданкисен нумай мĕлйунлă масси—ударницăсем, стахановкăсем, работницăсем, колхозницăсем, служащисем, йединоличницăсем, хĕрарăм-учонăйĕсем, хĕрарăм-летчицăсем, художницăсем, артисткăсем,—пурте суйлав урни патне пыраççĕ, государствă влаçĕн аслă органне—ССР Союзĕн Аслă Советне—тăван çĕршывăн чи тивĕçлĕ, Ленин—Сталин партин ĕçĕшĕн, халăх ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăракан ывăлĕсене суйлаççĕ.

(„Правда" умстатйи. 1937 çул, октябрĕн 14-мĕшĕ).

Китай хĕрарăмĕсем Йапони захватчикĕсемпе кĕрешес ĕçре

Йуњнањ провинцинче виçĕ пин хĕрарăм провинци правительствинчен хăйсене, Китайа никама пăхăнмала мар тăвассишĕн арçынсемпе танах кĕрешме, фронта йама ыйтнă.

Хĕçпăшаллă хирĕç кампанийе пулăшакан хĕрарăмсен ассоциацин Учжоури (Гуанси провинцийĕ) уйрăмĕ çитес вăхăтрах салтаксем валли вунă пин куртка çĕлесе хатĕрлеме пулнă.

(ТАСС).

ССР Союзĕн Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиççи ПĔЛТЕРНИ

ССР Союзĕн Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиççи çакăн пек адреслă çуртра вырнаçнă: **г. Москва, дом Союзов, Пушкинская улица (быв. Б. Дмитровка), десятый под'езд, второй этаж.**

Аслă Совета суйлама пĕтĕм çĕршыв пысăк çĕкленӳпе хатĕрленет

Пирĕн çĕршыв аслă та чаплă кунсенче пурăнать. Совет правительстви ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали кун çинчен пĕлтерчĕ. Мĕлйуншар рабочисем, колхозниксем, служащисем, учонăйсем, красноармейцăсем правительствă постановленине хĕрӳллĕн саламлаççĕ, суйлав кампанине организацилĕ пулса, большевикла ирттерме хатĕр тăни çинчен пĕлтереççĕ.

Харьковри Орджоникидзе районĕнчи митингра трактăр заводĕнчи чи лайăх стахановец, Тĕп Суйлав Комиççи членĕ Колесник йулташ сăмах туха каланă:

— Ман çине хуна çӳлĕ шанчăка тивĕçлĕ пулма, епĕ хамăн пĕтĕм вăйа тата пĕтĕм пĕлӳве хурса ĕçлеме пулатăп, тенĕ вăл.

Сталин йачĕпе тăракан автозаводра (Мускав), октябрĕн 13-мĕшĕнче, суйлав кампани пуçланнă йатпа заводри пĕтĕм рабочисен митингĕ пулса иртнĕ. Митинтра ПСК(б)П Мускав Комитечĕн тата Мускав хули Комитечĕн секретарĕ Хрушчов йулташ пысăк сăмах туха каланă. Митинга пухăннă рабочисем Хрушчов йулташа хĕрӳллĕн саламласа ал çупса кĕтсе илнĕ.

Пурте пĕр саспа, пысăк хаваслăхпа йышăннă резолюцире завод коллективĕ çапла калать:

— Епĕр, Мускаври Сталин йачĕпе тăракан автозаводри рабочисем, инженерсем тата служащисем, пурте пĕр çын пекех хамăрăн сасăсене большевиксен партийĕ тăратнă кандидатсемшĕн паратпăр. Пирĕн пĕрремĕш депутат Сталин йулташ пулать. Епĕр Сталин йулташа тата ПСК(б)П Тĕп Комитетне шантарсах калатпăр:— хамăрăн суйлав участкисенче суйлавçăсем пурте ССР Союзĕн Аслă Совечĕн суйлавне хутшăнмала тăватпăр.

Черкасски станицинчи (Оренбург облаçĕ) колхозник-казаксем йышăннă резолюцире: суйлав кампанине большевикла ирттеретпĕр, Аслă Совета Тăван Çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсене, Ленин—Сталин партийĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăракан çынсене суйлатпăр, тесе калаççĕ. Хĕрлĕ казачествă халăхăн тăшманĕсен хăтланăвĕсене çапса аркатма хатĕр тăрать. (ТАСС).

Мускав Аслă Совета вунтăватă депутат суйлать

Мускав ĕçхалăхĕ ССР Союзĕн Аслă Советне вунтăватă депутат: вунвиçĕ депутат Союз Советне тата пĕр депутат Национальноçсен Советне суйлать.

Столицăра 1.323 суйлав участки пулать. Вĕсем валли кирлĕ çуртсем тупса хатĕрленĕ те ĕнтĕ. Мĕн пур суйлав участкисенче вуламали çуртсем тата ачасем валли пӳлĕмсем тăваççĕ. Суйлавçăсен спискине пур участкăсенче те тунă.

Мускав совечĕ район совечĕсене суйлав бюллетенĕсем валли хатĕрленĕ конвертсене йарса панă та ĕнтĕ.

(ТАСС).

Сакăр пин агитатăр—йала

КИЙĔВ, октябрĕн 11-мĕш. Украинăри К(б) Парти Кийĕв Обкомĕ йалти организацисене ССР Союзĕн Аслă Советне суйлама тата Аслă социалисăмла революци çирĕм çул тултарнине уйавлама хатĕрленес ĕçре пулăшма канмали кунсенче сакăр пин агитатăр йарать.

Агитатăрсем колхозсене октябрĕн 12-мĕшĕнче массăлă туха кайнă.

Кунсăр пуçне тата, Обком облăçăн уйрăм районĕсенчи вырăнти организацисене суйлава хатĕрленес ĕçре куллен пулăшса пыма тепĕр икçĕр коммунис йарать.

Ватă рабочисем—агитатăрсем

ДНЕПРОПЕТРОВСК, октябрĕн 13-мĕш. (ТАСС). Петровски йачĕпе тăракан металлурги заводĕнчи çĕнĕ суйлав çаккунĕн активлă агитатăрĕсем хушшинче ватă рабочисем те сахал мар. Вĕсем каласа панисем — социалисăм аслă çĕнтерĕвĕн лайăх ӳкерчĕкĕсем. Ĕç ветеранĕсем кружок занятийĕ вăхăтĕнче çамрăксене 1912-мĕш çулта патшалăх думин суйлавĕ мĕнле пулса иртни, патша правительстви рабочисен прависене мĕнле хĕссе тата пӳлсе пыни çинчен каласа параççĕ.

Çамрăксем ватă рабочисем каласа панисене пысăк интереспа итлеççĕ. Çавăн пек каласусем заводри çамрăк рабочисен ССР Союзĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленессинчи хастарлăхне вăйлатаççĕ.

ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали кун çинчен пĕлтерни пирки йутçĕршывсенчи пичет мĕн çырать

Франциври компартин хаçачĕ „Юманите", Мускавран илнĕ телеграммăра, Совет Союзĕнчи ĕççыннисем ССР Союзĕн Аслă Советне Сталинла çĕнĕ Конституци тăрăх суйламали кун çинчен пĕлтернине пысăк хаваслăхпа кĕтсе илнине çырса пĕлтерет.

Чехословакири пĕтĕм общественнăç ССР Союзĕн Аслă Совечĕн çитес суйлавĕпе интересленет. Чехословакире тухса тăракан рабочи хаçатсем, ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали Положенин статйисем çинчен тĕплĕн çырса, статйасем пичетлеççĕ. (ТАСС).

Вăтаçĕр тинĕсĕнче.

Англин „Ноеми Жулиа" йатлă пăрахучĕ çине фашисла самолетсем бомбăсем пăрахнă, вара вăл ирексĕрех Вандр портне кĕрсе пытаннă. ӲКЕРЧĔКЕ ÇИНЧЕ: „Ноеми Жулиа" пăрахут Вандр портĕнче. (Союзфото).

Китай халăхĕ Йапони агрессине хирĕç виçĕ уйăх хушши кĕрешни

Йапони военшчини Китай халăхне хирĕç вăрçă вăрçни пит пысăккăн саралса кайнă. Китайа Йапони пысăк çар йанă, Йапонин тинĕс çинчи икĕ ескадри Китайăн çыранĕсене блокадă тăваççĕ. Йапони авиацин виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ кулленех Китайăн мирлĕ хулисем çине тапăнса çĕмĕреççĕ.

Йапони военшчини хăвăрт çĕнтерме шанса тăнă пулнă. Вăл культурăлă центрсене аркатса тата мирлĕ халăха вĕлерсе пĕтерсе, Китай халăхĕн хирĕç тăрас хăватне хуçасшăн, çапла вара Китайа парăнтарасшăн пулнă. Анчах Йапони Китайа чĕркуçлентереймен, ĕç пĕтĕмпех тепĕр майлă пулса тăнă.

Йапони захватчикĕсене хирĕç пĕтĕм Китай халăхĕ ура çине тăчĕ. Нанкин правительстви тавра-хĕçпăшалпа хирĕç тăнин центрĕ—политикăла пур йухăмсем те пĕрлешнĕ. Шалти граждан вăрçисем чарăннă. Гоминдан (Китайăн правительствăлă партийĕ) тата коммунисла парти, Китайа Йапони агрессинчен çăлса хăварас тĕллевпе пĕтĕм халăхăн Йапонийе хирĕç фронтне тунă никĕс çинче, пĕр пулса ĕçлеме тытăнни палăрать. Китайри коммунисла парти тытса пыракан пĕрлĕх фрончĕн политики пысăк çĕнтерӳсем тунă.

Вăрçă пуçлансан пирвайхи кунсенчех Китайăн пысăк хулисенче наци çăланăçĕн Йапонийе хирĕçле тĕрлĕрен организацисем чăмăртанма пуçланă. Шанхайри тата ытти хуласенчи рабочисем çара пулăшма добровольцăсен отрйачĕсене темиçе те тунă. Наци оборонин займне вырнаçтарас ĕç пысăк ăнаçлăхпа пырать. Ку займа çур мĕлйардлăх кăларнă та çуррине вырнаçтарнă ĕнтĕ.

Йапони военшчини виçĕ уйăх хушши ĕнтĕ Китайра вăрçă вăрçать. Вăрçă вăрçнин результачĕсем мĕнле-ха?

Виçĕ уйăх хушши вăрçса, Йапони çарĕсем çурçĕр фронтĕнче палăрса тăракан результатсемех тума пултарнă. Вĕсем Хебей провинцине, çак провинцин паха центрĕсене—Тяньцзин, Бейпин тата Баодин хулисене тытса илнĕ. Йапонин çарĕсем Шаньси тата Шаньдун провинцисен территорийĕсене пырса кĕнĕ. Тепĕр тĕрлĕ каласан, пĕтĕм çурçĕр Китайра вăрçă пырать. Кунта йапонцăсем Китай командованийĕн пĕр пайĕ тăтăклăн хирĕç тăманнипе тата тепĕр пайĕ предательсем пулнипе усă курса, малала кайса пынă, хытă хирĕç тăракан Китай çарĕсемпе тĕл пуличченех малала кайса пыма чарăнман.

Йулашки кунсенче Йапони çарĕ малала кайни вăрахланнă. Халĕ çурçĕр фронтĕнче Китай çарĕсем перегруппировкă тăваççĕ, хăватсăр командный состава улăштараççĕ. Чжу Де йертсе пыракан саккăрĕмĕш армине малти линине тăратнă. Чжу Де арми вăл Китайри Хĕрлĕ çар чăçĕсене пĕрлештерсе тунăскер. Йапони çарĕсен тылĕнче партизанла йухăм саралса пырать.

Шанхай фронтĕнче йапонцăсен çарĕсем нимĕнле паллă çĕнтерӳсем те тăвайман. Вĕсем виçĕ уйăх хушшинче вунпилĕк километр çеç малала кайма пултарнă. Ванпу тата Йанцзы шывĕсен çыранĕсенче хĕсĕк тăрăха йышăнса тăраççĕ. Кунта китайцăсен çарĕсем йапонцăсене хирĕç хастаррăн кĕрешеççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ, фронтăн çарсем çапăçакан тăршшĕ хĕрĕх километр çеç пулин те, Шанхай фронтĕнче йапонцăсен 150 пин çынлă çар тытмала килет.

Йапони военшчини, Китай правительстви çурçĕр фронтĕнче нимех те ан тăвайтăр тесе, Китай çарĕсене Шанхай патне пуçтарттарма тăрăшать.

Çурçĕр фронтĕнче те, Шанхай фронтĕнче те чи палли çакă пулать: Китай çарĕнчи офицерсемпе салтаксем хушшинче патриотла туйăм вăйлă çĕкленнĕ. Пурте йышăннă тăрăх, Китай çарĕсем тăван çĕршывшăн халиччченхинчен нумай хăватлăрах, паттăррăн çапăçаççĕ. Йапони çарĕсене хирĕç çапăçакан китайцăсем хушшинче „пĕр çын йулмиччене çапăçас", тенĕ лозунг саралнă.

Китай халăхĕ Йапони агрессине хирĕç виçĕ уйăх хушши çапăçни—ку вăл Китай халăхĕ хăйĕн нацилĕ ирĕклĕхĕшĕн вăрçă вăрçнин пуçламĕшĕ çеç-ха. Халĕ нацилĕ пĕрлĕх фрончĕн хăватлă вăйĕсем ĕçе кĕрсе пыраççĕ

(ТАСС).

Китай рабочисем пĕтĕм тĕнчери рабочисене чĕнсе калани

Шанхайри машинă тăвакан заводсенчи рабочисемпе печатниксем пĕтĕм тĕнчери машинă тăвакан промышленнăçри рабочисемпе печатниксем патне чĕнӳ йанă. Китай рабочисем йулташĕсене Йапони захватчикĕсемпе кĕрешес ĕçре пулăшма, Йапонийе тупăсем тата çар хатĕрĕсем йарассине чарма, хăйсен çĕршывĕсенчи капиталиссем Йапонийе кивçен укçа панине хирĕçлеме тата хăйсен правительстви умĕнче Китайа кирлĕ хатĕрсемпе пулăшмала тăвассине пурнăçа кĕртме чĕнеççĕ.

Кантонри çĕр пин члена пĕрлештерсе тăракан пулăçсен союзĕ пĕтĕм тĕнчери пулăçсем патне Йапони çар флочĕ Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи шывсенче çынсене хурахла вĕлернийе хирĕç мерă йышăнма чĕннĕ

(ТАСС).

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Хака хулин районĕнче (хĕвелтухăçри фронт) çапăçакан республикă çарĕсем октябрĕн 12-мĕшĕнче халăх пурнакан икĕ пункта йышăннă. Пăлхавçăсен 36 салтакĕ республиканцăсен йенне куçнă. Вĕсем пурте Галисире çуралнă çынсем. Йулашки вăхăтра çав провинцире çуралнă салтаксемпе çынсем республиканцăсем патне массăлă куçаççĕ.

Арагонири фронтра икĕ хут сывлăшра çапăçнă вăхăтра республикă летчикĕсем пăлхавçăсен çичĕ истребительне персе антарнă. Хăйсен пĕр самолет пĕтнĕ. Виçĕ Итали летчикне плена илнĕ, пĕри çунса кайнă. Летчиксем çумĕнче, вĕсем Итали çарĕнче службăра тăнине кăтартакан документсем пулнă.

Фашиссен авиацийĕ Гронйон йалĕнчи госпитăле çĕмĕрсе такнă.

Çурçĕрти фронтра пăлхавçăсемпе йутпатшалăх çарĕсем, тапăнува тăсса, Дагопа Паррес таранах малала пынă. Республикă çарĕсем, фашисла авиаци пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкнă Кангас де Снис йалне куçарса кайнă.

Тĕп фронтра республикă-çарĕсем Естрамадур çулĕ çинче пăлхавçăсен позицине атакăланă. Пăлхавçăсен çарĕсем тарнă. Пăлхавçăсен артиллерийĕ Мадрид çине бомбăсем пăрахнă. Йĕтресем хулан пур кварталĕсене те ӳкнĕ. Хула çыннисем хушшинче вилнисем пулнă.

(ТАСС).

Рузвельт сăмахĕ

ВАШИНГТОН, октябрĕн 13-мĕш (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕ Рузвельт радиопа каланă сăмахĕнче çĕршыв тулашĕнчи политикă ыйтăвĕсем çинче чарăнса тăнă.

Рузвельт Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи правительствă мире сыхлассинче интересленекен государствăсен туслă çирĕп тата йаланлăх лăпкă самана тăвассишĕн тăрăшать, тенĕ. Анчах, çапах та, лăпкă саманана, пĕр тăвас тенипех йе ним тумасăр кĕтсе ларнипех, туса çитерме çук, тенĕ малала Рузвельт. Епĕр 1922 çулта килĕшсе алă пуснă тăхăр державăн конференцинче пулма килĕшни çинчен, Америкăн мĕлйунлă халăхне пĕлтертĕмĕр. Вăл конференцин тĕп шухăшĕ—килĕшӳ туса Китайри лару-тăрува йĕркелесси пулать.

Пур Америкă халăхĕн пĕтĕм сисĕмлĕхĕ,—тенĕ йулашкинчен Рузвельт,—епĕ—Америкă вăрçăна кураймасть, Америкă лăпкă самана çине шанать, çавăнпа Америкă лăпкă саманана сыхлама тăрăшассинче хăйĕн активлăхне палăртать—тенипе пĕр шухăшлă.

Аслă Совета суйлас умĕн

Хаваслă пурăнăҫшăн сасăлатпăр

Октябĕрĕн 13-мĕшĕнче Шупашкарти Пединститутри сакăр ҫĕр студентсемпе преподавательсен тата служащчисен митингĕ пулса иртрĕ.

Митингра правительствă Аслă Совет суйлавĕн вăхăтне палăртни ҫинчен доклад итлерĕҫ.

Кун хыҫҫăн институтра вĕренекен студентсем тухса каларĕҫ.

Митинг йышăннă резољуцире ҫапла ҫырнă:

— Пирĕн чечекленсе, тĕреклĕнсе пыракан Совет Сойузĕнче пурăнма хавaслă. Епĕр, студентсем, Октябĕрти социалисăмлă революци 20 ҫул тултарнă уйава хатĕрленнĕ тата ҫĕнĕ суйлава хатĕрленнĕ май хула сывăхĕнчи йалсене кайса тата Шупашкарти килхуҫи арăмĕсенеҫĕнĕ суйлав ҫинчен тĕплĕн ăнлантарма пулатпăр.

Халăх тăшманĕсем—троцкисла-бухаринла, фашисла шпионсем, йалти пупсемпе сектантсем, хăйсен вараланчăк аллисене суйлав урнисем патне тăсма хатĕрленнине лайăх пĕлетпĕр. Епĕр сыхăлăхлă тăма, урса кайнă йытăсемпе пĕтĕм вăйпа кĕрешсе пыма пулатпăр.

Хамăрăн сасăсене ҫĕршыври чила йăх, чи шанчăклă ҫынсене паратпăр.

Сывă пултăр Сталинла Конституци!

Сывă пултăр пирĕн ҫулпуҫ, учитĕл Сталин йулташ!

Суйлав кампанине хĕрӳлĕн хутшăнаççĕ

Чăвашсен Коммунисла йалхуҫалăх Аслă шкулĕнче вĕренекенсемпе преподавательсем суйлав кунĕ ҫинчен кăларнă постановлени йаҫĕпе митинг туса ирттерчĕҫ.

Митингра доклад итленĕ хыҫҫăн, студентсем суйлав кампаничче хĕрӳлĕн ĕҫлеме обйазательствăсем илчĕҫ.

Студентсем нумайĕшĕ суйлав участкисенче пропагандиссем пулса ĕҫлеççĕ. Вĕсем пурте Октябĕрĕн 25-мĕш тĕлне килте пурăнакан хĕрарăмсемпе стариксем хушшинче, ҫĕнĕ Конституцине, Аслă Совета суйламалли йĕркесене тĕплĕн вĕрентессишĕн ĕҫлеме пулчĕҫ.

А. Парамонов.

Аслă Совета парти ĕҫĕшĕн кĕрешекенсене суйлар

Октябĕрĕн 13-мĕшĕнче, Шупашкарти кооптехникумри студентсен, ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас кампани пуҫланнине хисеплесе, митинг пулчĕ. Митингра Горелов преподавател тухса каларĕ. Митингра йышăннă резољуцире:

— Пĕтĕм Совет халăхĕпе пĕрле Суйлав кампани пуҫланнишĕн савăнатпăр.

Масса хушшинче „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положенине" ăнлантарса парассине вăйлататпăр.

Аслă Совета Ленин—Сталин парти ĕҫĕшĕн кĕрешекен ҫынсене суйлатпăр,— терĕҫ.

Й. Йегоров.

Суйлавҫăсен кружокĕсенче

ИШЛЕЙ. Тивĕш йалсоветĕнче „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положенине" вĕренме 3 кружок уҫнă. Кружоксенче 180 суйлавҫă вĕренет. Заҥатисене вăтам шкулта вĕрентекен учитĕлсем туса ирттереççĕ.

И. Волков.

* * *

ВĂРМАР. Пысăк Йенкасси йалсовечĕ суйлавҫăсен спискисене туса хатĕрленĕ хыҫҫăн, суйлав участкисенчи кружоксен ĕҫне чылайах лайăхлатрĕ. Кружоксене вĕренме 60—70 шер суйлавҫă ҫӳрет.

В. В.

* * *

ТĂВАЙ. „Красная Чувашия" колхозра пурĕ 14 бригадă. Кашни бригадăрах кружоксем пур. Заҥатисене вăхăтра туса ирттереççĕ, 417 суйлавҫă вĕренме ҫӳреççĕ.

Лазарев.

Выљăхсем ăшă витесĕр тăрса йулаççĕ

Канаш районĕнчи Сиккассинчи Шмидт йачĕпе тăракан колхозра 174 лашана 8 тĕлте усраççĕ. Витисем ҫĕмĕрĕлсе пĕтнĕ, шăтăк ҫурăксене питĕрмен, кантăкĕсем ваннă. 1-мĕш бригадăн 6 лаша тăмалăх витере пĕр пĕчĕк ҫеҫ чӳрече пур, витисем патне пырса кĕме май ҫук, навус ҫăрăлса тăрать. Коњухсем пурăнакан пӳртне май уйăхĕ иртнĕреппех ҫуман, вырса тăма койкăсем ҫитмеççĕ, сĕтел тавраш ҫук, бригадир Мухин вĕсем ҫине ҫавăрăнса та пăхмасть.

2-мĕш бригадăри (бригадирĕ Волков) 18 лашана виҫĕ колхозник патĕнче усраççĕ. Кун пек виҫ-тăватă тĕлте тăратнипе пусыпка тавраш ĕсем час-часах ăйкнипе кайаççĕ. Ҫавăн пекех 3-мĕш бригадăри 18 лашаран 8 лашине выран ҫитмест.

Ҫак колхозрах сысна ферми пур. 100 сысна вырнаҫмалăх витере 157 сысна усраççĕ. Витен урайĕсем шăтса пĕтнĕ.

Правленинче ĕҫлĕкенсем ҫак ҫитменлĕхсене пĕтермеççĕ. 4-мĕш бригадăн бригадирĕ Куҫмин Михаил правленкрен ыйтмасăрах 25 лаша вырнаҫмалăх саманнăй вите тунă. Правлени ҫак ĕҫ ҫинчен пĕлсен, ҫав витен урайпе маччине сӳттерсе урăх ĕҫе йанă.

Выљăх апачĕ хатĕрлессипе те начар ĕҫлеççĕ. Ку тарана ҫитсе пĕр килограм та ҫилос хывман. Фермăра кăҫал 6 лăру пулмала, анчах вĕсене усрама выран хатĕрлемен.

И. В. Радиков.

Хаҫат работникĕсен шкулĕнче

Шупашкарти хаҫат шкулĕнчи студентсем вĕренӳ ҫулĕ пуҫланнăранпа Оборона значокĕсене илмелли нормăсене пама пуҫларĕҫ. Кашни кашнилех кунах Ворошилов пек тĕл пеме вĕренме тата ГТО значокĕн нормисене параççĕ. Ку тарана ҫитсе 10 студент ГТО значокĕн суллахи нормисене пана ĕнтĕ. Хаҫат редакцийĕсене ĕҫлеме каймалли студентсем пурте ГТО, ПВХО, ГСО, Ворошилов пек тĕл пеекенсен значокĕсене илессишĕн тăрăшаççĕ.

Литература кружокĕ ҫумĕнче „Хĕлхем" ятлă алăпа ҫырнă журнал тухса тăрать. Аслă пролетарилле революци уявĕ тĕлне йăтарласа журнал кăларăççĕ. Унта студентсем ҫырнă калавсемпе сăвăсем пулаççĕ.

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положенине вĕренме йĕркелесе тарласах кружок тунă. Унта студентсем вĕренме йĕркелĕ ҫӳрерĕҫ. Халĕ Положенине студентсем мĕнле ăнланнине тĕрĕслерĕҫ. Тĕрĕслӳ Положенине аван ăнланнине кăтартса пачĕ. ПСҪЛКС Шупашкар хула комитечĕ хулари уйрăм учрежденисемпе организацисенчи кружоксене 10 комсомолеца пропагандиссем туса янă. Ҫитес канмали кунра 8 комсомолĕс Положенине ăнлантарма Тутаркас, Ишлей, Шупашкар районĕсенчи йалсене тухса каяççĕ. „Пропагандиссене шкулти парти кабинечĕ, ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положени пирки консультаци парсах тăрать. Парти кабинетĕнче Положени пирки уйрăм витрина пур.

Студентсем Октябер уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса татăклă обязательствăсем йышăнаççĕ. Тăрăшса вĕренессине суйламалли ăмăрту сарса янă. Ăмăрту мĕнле пынине группăри стена хаҫачĕсем ҫутатсах пыраççĕ.

Прок. Йаргуњкин.

Вожатăйсен республикăри шкулĕ

Август уйăхĕнчен пуҫласа комсомол Чăваш Обкомĕ ҫумĕнче аслă пионер-вожатăйсен шкулĕ уҫăлчĕ. Анчах ку шкула уҫма комсомол Обкомĕ кирлĕ пек хатĕрленмен. Шкула вĕренме илессине сăпатне лайăххăн тĕпчесе тĕрĕслемен.

Вожатăйсен шкулне вĕренме илес тĕлĕшпе ĕҫлекен комиссин председателĕ халăх тăшманĕсемпе ҫыхăнса кайнă Терентйĕв пулнă. Ахаљтен мар ĕнтĕ вожатăйсен шкулне Терентйĕв алли витĕр троцкисл Казанков йышши ҫынсем те кĕрсе кайнă. Ҫак ирсĕр етем Казанков шкула кĕнĕ-кĕмен студентсен хушшинче троцкисла ирсĕр шухăшсем сарма тытăннă. Ҫавăн пекех, шкула халăх тăшманне ҫаратса пурăнма вĕренмĕ Мурашкина та сĕтĕрĕнсе кĕнĕ.

Шкулти преподавательсемпе учительсен составне тивĕҫлĕ кадрсемпе ҫирĕплетмен. Икĕ уйăх хушшинче шкул виҫĕ директăра ситрĕ. Вĕрентекенсем кунта 7 ҫын ĕҫлемелле пулсан, халĕ мĕн пурĕ те 2 ҫын кăна ĕҫлет.

Комсомол Обкомĕпе Сутĕҫ халăх комиссариачĕ сийелтен пăхнипех, шкул пайан учебниксемсĕр тата ытти вĕренӳ хатĕрĕсемсĕр ларать. Тетрадĕсем ҫук, партăсене доскасен те ситеймĕҫ. Шкул директорĕ Воробйов йулташ шкулти ситменлĕхсене пĕтерес тесе тăрăшмасть. Шкулăн малтанах шкула ҫуррĕ, общежити, столовăй пулман. Ҫакна пула студентсем пĕр уйăх хушшинче 4 общежитине, икĕ шкул ҫуртне ситсе хăналанчĕҫ. Столовăй пирки вара калаҫмали те ҫук.

Шкул малала та куп пек йуама пултараймасть. Пионерсем паха пĕлӳпе вожатăйсем ытлаççĕ. Комсомол Обкомĕн, ҫавăн пекех Сутĕҫ халăх комиссариачĕн те вожатăйсене хатĕрлес ĕҫ сине тимлĕрех ҫавăрăнса пăхмала.

Вожатăйсен шкулĕнчи комсомол комитечĕн секретарĕ Мих. Александров.

Чăваш физкуљтурникĕсем Тарасовка—Мускав чупувĕнче

Мускаври Ленин орденне илнĕ „Спартак" обществин Совечĕ кашни ҫулах Тарасовка — Мускав маршрутĕпе чупу туса ирттерет. Чупу маршрутĕ 28 километр.

Кăҫал „Спартак" обществин Чăваш организацийĕ ҫак чупăва хутшăнма чĕнчĕ. Чупу условийĕсене тăрăх пĕрремĕш группăра хутшăнакансен команди 5 ҫынтан пулмала. Чупу старчĕ 1937 ҫулти октябĕрĕн 18-мĕшĕнче пулать. Чăваш республикĕнчи спартакăвцăсенчен 5 ҫын, лайăх физкуљтурниксем кайаççĕ. **Т. И. Петров** (Йĕпреҫ районĕнчи Сосновкăри колхозран)—1000, 1500 тата 5000 метр чупас тĕлĕшри Чăваш республикĕнчи рекордсмен, **С. Бурашников** (Иетĕрне р.) самрăк, хăвăрт ӳссе пыракан спортсмен, **П. М. Майоров** (Ишлей р., Мăналсем) инче чупас тĕлĕшпе республикăра тата Атăл тăрăхĕнче пулнă ăмăртусене хутшăннăскер, **Г. И. Иванов** (Шупашкар хулинчен) хытă чупакан спортсменсенчен пĕри. Пиллĕкмĕшĕ—**Сапожников** (Иетĕрне районĕнчен), самрăк, ӳссе пыракан спортсмен. Вĕсем октябĕрĕн 1-мĕшĕнчен пуҫласа Шупашкарпа Иетĕрне хушшинчи ҫул ҫинче кашни кун чупса хăнăхнă.

Ҫакăн пек пысăк чупăва пирĕн республикăри физкуљтурниксем пĕрремĕш хут хутшăнаççĕ.

К. Никишев.

Капиталисăм пусмăрĕнче

Совет Сойузĕ—социалисăм ҫĕнтернĕ ҫĕршыв. Пирĕн ҫĕршывра кашни ҫынăн ĕҫлев прави, кану прави, вĕренӳ прави пур. Епĕр хамăрăн ыранхи пурнăҫшăн куљанмастпăр. Ҫавăнпа та Совет Сойузĕнче геройсем, ĕҫ паттăрĕсем, хăйулă ҫынсем, ĕҫе пуҫаракансем нумай, вĕсем кашни кунах нумайланса пыраççĕ. Совет Сойузĕнчи нумай мĕлйунлă халăх социалисăмшăн, Ленин—Сталин парти ĕҫĕшĕн, Совет власĕн ĕҫĕшĕн кĕрешме йалан хатĕр тăрать. Совет Сойузĕнчи халăхсем кĕрешсе илнĕ историлĕ ҫитĕнӳсене Сталинла Конституци ҫине ĕмĕрлĕхе ҫырса хунă. Вĕсем пире ҫĕнĕ пысăк ҫĕнтерӳсем тăвассишĕн кĕрешме хаваслантараççĕ.

Ҫав вăхăтрах капиталисăмла ҫĕршывсенчи рабочисемпе ĕҫсыннисен пурнăҫне илсе пăхсан, епĕр тĕлĕнмелле хăрушă картинă куратпăр. Капиталисăмла строй ĕҫхалăхне нушалă, асаплă, хĕнхурлă пурнăҫ патне илсе пырса тăратрĕ. Капиталисăм хăйĕн пурнăҫ срукне чăсас тесе, рабочисемпе ĕҫсыннисен пурнăҫĕ ҫине тискеррĕн тапăнса пырать.

Ĕҫ. Пирĕн социалисăмла ҫĕршывра безработицă ҫинчен аса та илмеççĕ. Кашни ҫын ĕҫлĕ. Ĕҫсĕр тăрса йулас хăрушлăх пĕтнĕ. Капиталисăмла ҫĕршывсенче безработицă темиҫе мĕлйун ҫынна асаплантарать. Вăрҫă хыҫҫăнхи тата тĕнчери економикăла кризис безработицăна ҫав тери ӳстерсе йачĕ. Акă хăшпĕр фактсем. Вĕсем капиталисăмла государствăсенчи ĕҫсыннисен пурнăҫĕ мĕнле йăвăррине пит те уҫҫăн кăтартса параççĕ.

Лига наци аллинче пур сведĕнисем капиталисăмла ҫĕршывсенче ĕҫ ҫуккипе аптракан ҫынсем мĕн чухлине ҫапла кăтартса параççĕ: Капиталисăмла 32 ҫĕршывра безработнăйсем 1929 ҫулта 6 мĕлйун, 1930 ҫулта 12 мĕлйун. 1931 ҫулта 19 мĕлйун, 1932 ҫулта 26 мĕлйун, 1933 ҫулта 26 мĕлйун пулнă. 1934 ҫултан пуҫласа ҫак цифăр кăштах чакнă пек курăнать. 1934 ҫулта 22 мĕлйун, 1935 ҫулта 21 мĕлйун, 1936 ҫулта 20,5 мĕлйун. Анчах ку цифăр тĕрĕссине никам та ĕненме пултараймасть. Капиталисăмла ҫĕршывсем хăйсен миҫе безработнăй пурри ҫинчен нихăҫан та тĕрĕссине каламаççĕ, йаланах пĕчĕклетсе кăтартаççĕ. 21 мĕлйун безработнăйсен ҫумне вĕсен ҫемйисене хушсан, ку цифăр 2—3 хут ӳсет. Ҫапла вара темиҫе вунă мĕлйун халăх ĕҫ ҫуккипе нуша тӳссе пурăнать. Капиталисăмла условире ĕҫ ҫукки мĕне пĕлтерет? Ҫиме ҫăкăр ҫуккине, тăхăнма тумтир ҫуккине, выртса тăма хватер ҫуккине пĕлтерет. Ĕҫ тупайман ҫынсем ытла пуҫсăр начар пурăнаççĕ. Ҫавăн пирки вĕсем хушшинче хăйсене-хăйсем вĕлерекенсем нумай. Акă, фашисла Германире 1936 ҫулта 7000 ҫын хăйне-хăй вилнĕ. Сăлтавĕ — ĕҫ ҫукки, пурнăҫ тӳсме ҫук йăвăрри. Ырă пурнăҫран мар ĕнтĕ ашшĕсем малтан ачисене, арăмĕсене вĕлереççĕ те, кайран хăйсем вилеççĕ. Мĕншĕн тесен, вĕсен халхи пурнăҫĕ йытă пурнăҫĕнчен начар. Пĕр татăк ҫăкăр ҫук, шкула ҫӳрекен ачасем ҫарран ҫӳреççĕ, тăхăнма тумтир, атă-пушмак ҫук. Хватер ҫук пирки кĕпер айĕсенче, ҫӳп-ҫап пăрахакан вырăнсенче пурăнаççĕ. Ҫак йăвăр пурнăҫ лайăхланасса кĕтмелле пулсан йурĕччĕ, анчах капиталисăмла государствăсенче унашкал шанчăк та ҫук.

Хресченсен ҫĕр ҫук. Ҫĕрĕ ҫук, парăмĕ пур, пусмăрĕ пур. Акă куҫа сийĕкен цифăрсем. Германире 412 помещчик икĕ мĕлйун хресчен хуҫалăхĕ тытнă чухлĕ ҫĕр тытса тăраççĕ. Венгрире пĕтĕм ҫĕр лаптăкĕнчен 11 проценчĕ ҫеҫ хресченсен аллинче. Помещчиксем 66 процент ҫĕре хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Австри помещчикĕсен аллинче 47 процент ытла. Йапоцире шултăра помещчиксем пĕтĕм ҫĕр хуҫисенчен 1 процент шутланаççĕ, анчах вĕсен аллинче ҫĕр 26 процент ытла. Икĕ мĕлйун ҫурă хресчен хуҫалăхĕнчен кашни хуҫалăхне ҫĕр ҫур гектартан та сахал тивет. Ҫак икĕ мĕлйун ҫурă хуҫалăхăн пĕтĕм ҫĕрĕ те патша пĕччен тытса тăнă ҫĕртен нумай сахал.

Капиталисăмла ҫĕршывсенче рабочисемпе хресченсен пурнăҫĕ пĕрмайах начарланса пырать. Фашисла Германире, Италире, Йапонипе Пољщăра тӳсме ҫук йăвăр.

Капиталисăмла государствăсенче ҫак йулашки ҫулсенче темиҫе мĕлйун тоннă продовољствине шыва йарса, ҫунтарса пĕтернĕ. Мĕншĕн тесен, ҫав таварсен хакне урăхла ӳстерме май ҫук. Ҫав вăхăтрах ҫĕршер мĕлйун ҫын выҫăпа аптрать. Капиталисшăн пулсан рабочи, хресчен выҫăпа вилни нимĕн те мар, услам нумай илсе пултăр уншăн. Харам пырăн, йун ĕҫекен йытăн саккунĕ ҫапла.

Тĕслĕхе фашисла Италийе илĕпĕр. 1930 ҫулта ҫентабĕрĕн 17-мĕшĕнче Муссолини ҫапла каланă: „Итали халăхĕ кунне темиҫе хутчен апат ҫиме хăнăхман. Ҫавăнпа та вăл ҫукшăн, нушашăн ытлашши хытă куљљанма вĕренмен. Ку пирĕн телей". Германи фашисăмĕ те халăха аш-какай, сĕт-ҫу, ҫăкăр сахал ҫиме вĕрентет, Ун вырăнне Италипе Германи фашисĕсем тупăсем, самољотсем, газсем—ҫынна вĕлерсе пĕтермелли усал йапаласем нумай тăваççĕ. Пĕтĕм халăх хуҫалăхне вăрҫа хатĕрленес ĕҫе пăхăнтараççĕ.

Рабочисемпе хресченсен пурнăҫĕ ҫеҫ мар, ĕҫ интеллигенцийĕн пурнăҫĕ те начарланса пырать. Америкăра 200 пин учитĕлрен, инженерсемпе техниксенчен 65 проценчĕ, аптекăсенче ĕҫлекенсенчен 50 проценчĕ ĕҫсĕр пурăнать. Капиталиссем шкулсене нумай хупса пĕтереççĕ. Темиҫе мĕлйун самрăк вĕренмесĕр тăрса йулаççĕ. Фашисла Германире 1932 ҫулта 145 пин студент пулнă пулсан, 1936 ҫулта 76 пин ҫеҫ тăрса йулнă.

Капиталисăмла ҫĕршывсенче, уйрăмах фашисла государствăсенче ĕҫсыннисен политикăла прави, демократилĕ ирĕклĕхĕ ҫинчен асăнма та ҫук. Германи тĕрмесемпе, лагĕрсемпе тулса ларнă. Темиҫе ҫĕр пин ҫын тĕрмесемпе лагĕрсенче асап тӳсеççĕ. Италире те, Йапонире те, Пољшăра та ĕҫсыннисен демократилĕ ирĕклĕхсем хут ҫинче ҫеҫ, чăннипе вĕсен нимĕнле политикăла права та ҫук.

Анчах рабочисемпе хресченсем капиталисăм пусмăрне ĕмĕрех чăтма пултараймаççĕ. Вĕсем капиталисăм сăнчăрне ҫапса аркатма кĕрешӳве хатĕрленеççĕ. Капиталисăмла ҫĕршывсенчи ĕҫсыннисем революцилĕ кĕрешӳ ҫулĕ ҫинче ҫеҫ нушаллăхран тухма май пуррине ăнлансах пыраççĕ. Капиталисăмла ҫĕршывсенчи ĕҫсыннисене асаплă пурнăҫран тухмалли ҫула Совет Сойузĕ—социалисăм ҫĕнтернĕ ҫĕршыв уҫҫăн та шанчăклăн кăтартса парать.

А. Напорко

Рабочисемпе хресченсен социалисăмлă государстви

Социалисăмăн питех те пысăк, Сталинла Конституцире ҫырса хунă ҫĕнтерĕвĕ вăл—пирĕн ҫĕршывра експлоататăрла классене пĕтерни, пĕтĕмĕшпе илсен, коммунисăм обществин пĕрремĕш сыпăкне—социалисăма туса ҫитерни пулать. „ССР Сойузĕщĕн,—тенĕ Сталин йулташ Пĕтĕм Сойузри Советсен Чрезвычайлă УШ-мĕш Сиесĕнче,—социалисăм вăл ĕнтĕ кĕрешсе ҫĕнтерсе илни пулать".

Социалисăмла строй тунине кĕрешсе ҫĕнтерсе илнĕ тата социалисăм ҫĕршывĕн, унăн економикăла никĕсĕ социалисăмла харпăрлăх пулса тăракан ҫĕршывăн, тĕп саккунĕнчĕ ҫырса хунă, експлоататăрла классене пĕтернине те кĕрешсе ҫĕнтерсе илнĕ тата ҫĕршывăн тĕп саккунĕнче ҫырса хунă. Пирĕн ҫĕршывра хăйсен интересĕсемпе пĕр-пĕрне хирĕҫле классем ҫук, ҫынна ҫын експлоатацилесси тата ăна ҫуратса кăларакан сăлтавсем те ҫук ĕнтĕ,—ҫакна та кĕрешсе илсе, ҫĕршывăн тĕп саккунĕнче ҫырса хунă.

Сталинла Конституцин пĕрремĕш статйи ҫапла калать: „Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕ рабочисемпе хресченсен социалисăмлă государстви пулса тăрать". Сталинла Конституцин пĕрремĕш статйи ҫапла ĕнтĕ кĕскен те простой сăмахсемпе **совет общчĕствин класлă структурине, вăл икĕ класран—рабочисенчен тата хресченсенчен тăнине питĕ тĕрĕссĕн кăтартса панă. Вăл классем социалисăмлă государствăн никĕсĕ пулса тăраççĕ.**

Аслă Социалисăмлă революци 1917 ҫулхи октябĕртĕ пролетари диктатурине туса хучĕ, кивĕ государствă аппаратне ҫĕмĕрсе тăкрĕ, государствăлă организацин **ҫĕнĕ типне**—пролетарилĕ социалисăмлă государствă туса хучĕ. Анчах, власа илнĕ хыҫҫăнах, совет власĕн пирвайхи вăхăтĕнче „советлă социалисăмлă республика" тени вăл економикăла ҫĕнĕ йĕркесене социалисăмла йĕрке-сем тесе йышăннине мар, совет власĕ социалисăма куҫассине пурнăҫлама хăватлăн хатĕррине" пĕлтернĕ. (Ленин, т. XXII, стр. 513). Халљхи вăхăтра ĕнтĕ социалисăмлă государствă тени вăл хуҫалăхăн пурнăҫа кĕртнĕ социалисăмлă системине, ҫĕршывăн пĕтĕм економикинче социалисăмлă йĕркесем туса хунине палăртса тăрать.

Сталинла Конституцире пирĕн государствă рабочисемпе хресченсен социалисăмлă государстви пулса тăрать тенĕ факт—вăл пирĕн ҫĕршывра халĕ те-ха классем пуррине, рабочисен класĕ тата хресченсен класĕ пуррине пĕлтерет. Анчах вăл классем—хăйсен интересĕсемпе пĕр-пĕрне хирĕҫле классем мар, вĕсем туслă классем, вĕсем пĕр пек тĕллевсемпе тата задачăсемпе пĕрлешсе, **пĕрлĕхлĕ социалисăмлă куҫалăх системинче** ĕҫлеççĕ. Классене пĕтерес тĕлĕшпе татса паракан тĕп ĕҫе тунă пулсан та,—татса паракан тĕп ĕҫ експлоататăрла классене пĕтерни, пирĕн ҫĕршывра пĕр-пĕрне хирĕҫле классем ҫукки пулать,—классене пĕтерес процес пĕтĕмĕшпе пĕтмен-ха.

Сталинла Конституци ҫĕршывра пулса иртнĕ улшăнусене ҫырса хурса, утса тухнă ҫула ҫирĕплетсе хучĕ. Сталинла Конституцире рабочи клас тата пĕтĕм ĕҫсыннисем нумай ăрусен ĕмĕрĕсенче иртернĕ кĕрешӳ итогне турĕ, **пролетари диктатури** пирĕн ҫĕршывра социалисăм ҫĕнтерӳвĕшĕн 20 ҫула йахăн кĕрешнин итогне турĕ. Маркс тата Енгĕлс „Коммунисла манифестра" социалисăм пролетариат кĕрешӳвĕн тĕп тĕллевĕ пулнине кăтартса панă пулсан, Сталинла Конституци хăйĕн вилĕмсĕр страницисем ҫине социалисăм ĕнтĕ вăл—туса ҫитерне ҫĕнтерӳ пулнине, **тĕпрен илсен социалисăма туса ҫитернине** ҫырса хучĕ. Сталинла Конституци—кĕрешсе ҫĕнтерсе илнĕ социалисăмăн манифесĕ пулса тăрать.

Експлоататăрла классем нацилĕ хиресурсене чĕртсе пыракан [illegible] тăрсем пулнă, вĕсем халăхсем хушшине пĕр-пĕрне шанманлăх сарнă. Влаҫ рабочи клас аллинче пулни, политикăлă тата хуҫалăхлă пурнăҫăн пур облаҫĕсенче те халăхсем пĕр-пĕрне пулăшса пырасси ĕҫре пулни—ССР Сойузĕнчи халăхсем пĕр-пĕрне шанманни пĕтни, патне илсе ҫитерчĕ, Ленинла-сталинла наци политикин никĕсĕ ҫинче ССР Сойузĕнчи халăхсен аслă тăванлăхĕ ĕмĕрлĕхе ҫирĕпленчĕ, вĕсем тăванла килĕшсе ĕҫлесси йĕркеленчĕ. „Ҫавна пула епĕр халљ пĕтĕмпех пулса ситнĕ тата нумай йăвăрлăхсене тӳссе иртернĕ нумай нацилĕ социалисăмлă государствă туса ҫитертĕмĕр, унăн ҫирĕплĕхне ҫутҫанталăкăн кирек хăш пайĕнчи кирек хăш нацилĕ государствă та хапсăнма пултарĕччĕ". (И. Сталин,—„ССР Сойузĕн Конституци пройекчĕ ҫинчен").

Пролетариатăн аслă ҫулпуҫĕсем Ленин тата Сталин йаланах пролетариат диктатури вăл рабочисемпе хресченсен—йертсе пыраканни рабочи клас пулмали—класлă сойузĕн уйрăм форми пулать, тесе шухăшланă. Ҫак икĕ класăн сойузĕ капитала ҫавăрса ҫапас, социалисăмлă общчĕствă туса ҫирĕплетес тата классене йăлтах пĕтерес тĕллев тытать. Сталинла Конституци условийĕсенче Ленин—Сталин рабочи класăн диктатури ҫинчен вĕрентни питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ҫĕнĕ Конституци ĕҫе кĕни, советсен танах мăр суйлавĕсем вырăнне—пĕртан суйлавсем, нумай сыпăклă суйлавсем вырăнне—тӳрех суйлавсем, уҫă суйлавсем вырăнне—хуппăн суйлавсем туни,—массăсен политикăлă активлăхне малала тата ытларах ӳстерет, государствă управлени ĕҫне ĕҫсыннисен ҫĕнĕ сийĕсене йăвăҫтарать. Рабочи класăн диктатури тата меллĕрех пулать, апла пулсан, рабочи клас, общчĕствăна государствăла йертсе пырасин хăватлăрах системи пулать. Пролетари диктатурин бази анлăланать, унăн никĕсĕ тата тĕреклĕрех пулса тăрать.

Сталинла Конституцире рабочи клас общчĕствăна коммунисăм тăвас ҫулпа малала кайма йертсе пырас ролĕн ҫĕнĕ формине ҫирĕплетсе хунă. Сталинла Конституци ҫакна асра тытать: „общчĕствăна государствăла йертсе пырасси (диктатура) общчĕствăн малта пыракан классен, рабочи класăн аллинче, тăрать" [illegible] (Сталин). Совет общчĕствин икĕ тĕп класĕсем, рабочисен тата хресченсен класĕсем хушшинче **класлă тĕп уйрăмлăхсем** ҫук ĕнтĕ. Хуҫалăхăн социалисăмлă формисем хулара та, йалта та пуҫпулса тăраççĕ. Ҫакă вăл совет общчĕствин туслă икĕ класĕ хушшинчи сойуза нихăҫан пăсăлми тăвать. Ҫакă вăл рабочи класпа хресченсен сойузĕ ҫине тайанса тăракан рабочи клас диктатурине ҫĕнĕ, **ҫӳлĕрех сыпăка** хăпартать, ҫавна тунипе рабочи класăн диктатурин аталанăвĕнче ҫĕнĕ тапхăр уҫать.

Рабочи класпа хресченсен хушшинче тĕп уйрăмлăх ҫук ĕнтĕ, анчах апла пулсан та уйрăмлăхсем татăкланах пĕтсе ҫитмен-ха. Вăл уйрăмлăхсем социалисăмлă харпăрлăх икĕ формăлă пулнинчен: государствă, урăхла каласан, пĕтĕм халăхăн харпăрлăхĕ тата колхозлă-кооперативлă харпăрлăх пурринчен килет. Социалисăмлă предприйатисем государствăн, урăхла каласан пĕтĕм халăхăн пурлăхĕ пулса тăраççĕ. Колхозра—производствăна организацилессин тата тупăшсене валеҫессин ăрасна форми. Колхозра колхозникăн личнăй интересĕ общчĕствăла интереспе ăрасна майпа пĕтĕҫсе тăрать. Унта общчĕствăлă тĕп хуҫалăхпа йунашар (йалхуҫалăх ертелĕн уставĕ кăтартнă пысăкĕш) колхозникĕн хăйĕн хушма хуҫалăхĕ пур. Паллах ĕнтĕ, халљ рабочисемпе хресченсем туслăхпа тата пĕрлехи интересемпе нихăҫанхинчен те ытларах пĕтĕҫнĕ. Икĕ класĕ те пĕр типлă—социалисăмла хуҫалăхра ĕҫлеççĕ. Анчах рабочи класпа хресченсен хушшинче уйрăмлăх пуррине курмасан, ҫавна шута илмесен, вăл вара рабочи класăн хресченсене йертсе пырас рољне йыщăнманни пулнă пулĕччĕ. Рабочи класпа хресченсем хушшинчи уйрăмлăха йышăнманни хресчене-колхознике малала воспитани парас, социалисăм ҫĕнтерĕвĕсемпĕн малала кĕрешес ĕҫре рабочи класăн тата партин политикăлă ҫивĕчлĕхне мăкатать.

Рабочи клас тата хресченсем совет общчĕствин ăрасна класĕсем пулса тăраççĕ-ха. Ҫавна май ĕнтĕ социалисăмлă государствă умĕнче „общчĕствăна урăхлатса ҫĕнетес тата классене татăкланах пĕтерес тĕлĕшпе, ҫĕршыва тулăшри тăш-[illegible] питĕ пысăк задачăсем тăраççĕ",—ҫапла кăтартса пачĕ Молотов йулташ Советсен Чрезвычайлă УШ-мĕш сиесĕнче каланă сăмахĕнче.

Пирĕн ҫĕршывра експлоататăрла классене пĕтернĕ пулсан та, вăл классен хăйпăнчăкĕсем пур-ха, ҫавсене хирĕҫ рабочи клас диктатурин ҫирĕп алли пĕр чăрăнмасăр кĕрешмеле, халăхăн тăшманĕсене пурне те ним шеллемесĕр пусарса пымала. Социалисăм халĕ пĕр ҫĕршывра ҫеҫ ҫĕнтернине манма йурамасть. Социалисăмăн ҫĕнтерĕвĕсем икĕ системăсен кĕрешӳне—капиталисăмлă тата социалисăмлă системăсен кĕрешӳне ҫивĕчлетеççĕ. Фашисла государствăсем пур майсемпе те пирĕн ҫĕршывăн хăватне хавшатма, социалисăм строительствине чарса лартма тăрăшаççĕ. Ҫав тĕллевпе капиталисла государствăсем, уйрăмăнах фашисла государствăсем, пирĕн пата шпионсем, диверсантсем, сăтăрҫăсем йараççĕ, ҫĕмĕрсе тăкнă тăшманла классен хăйпăнчăкĕсене тата троцкиссемпе бухаринцăсен контрреволюцилĕ группинсене чĕртме тăрăшаççĕ, вĕсене пирĕн ҫĕршывра сăтăрла ĕҫсем тума йăвăҫтараççĕ. Рабочи клас диктатурин малашне те фашисăма тара кĕрешнĕ троцкисла-бухаринла шпионсене тата сăтăрҫăсене хурăҫ пек ҫирĕп алăпа тыткаласа пĕтерсе пымала. Питĕ тĕрĕс каланă Максим Горьки: „Тăшман парăнмасть пулсан, ăна пĕтереççĕ". Социалисăмлă государствă тăшмансене пусмăрлани вăл пĕтĕм халăх кăмăлне тата интересне пĕлтерет. Сисĕмлĕх, халăх тăшманĕсене хирĕҫ пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешни—малала, коммунисăм патне кайма пире чи кирлĕ услови пулса тăрать.

Сталинла Конституци условийĕнче ĕҫсыннисен пур организацийĕсене те йертсе пыракан коммунисла партин вырăнĕ тата ролĕ пит те пысăккăн ӳсрĕ. Ҫакна Аслă Совета пĕртан, тӳрех тата хуппăн (вăрттăн) сасăласа суйланă вăхăтра уйрăмăнах асра тытмала. Парти йертсе пыни—рабочи класăн диктатурине ҫирĕплетессин чи кирлĕ условийĕ.

„Вăйлă та хăватлă пролетари диктатури,—акă мĕн кирлĕ пире халљ вилсе пыракан классен йулнă йулашкисене кĕл пек туса вĕстерсе йама тата вĕсен вăрă [illegible] Сталин йулташ 1933 ҫулта ПСК(б)П Тĕп комĕн йанварти Пленумĕнче. Сталин йулташăн аслă сăмахĕсен пĕтĕм пахалăхĕ пайан кунччен ҫав-ҫавах пулать. Унтан та ытларах, социалисăмăн ҫĕнтерӳвĕсене кура, ҫĕмĕрсе тăкнă тăшманла классен йулашкисем, хăйпăнчăкĕсем рабочи клас диктатурине хирĕҫ урса кайнă кĕрешӳ формисене йарса тытаççĕ. Ҫаксем пурте рабочи клас диктатурин хăватне чакарма йураманнине кăтартаççĕ, **ăна пур майсемпе те ҫирĕплетсе пыма** хушаççĕ.

Обывательсем ҫеҫ, идиотлă чир—тимсĕрлĕх йерне ҫынсем ҫеҫ социалисăм стройĕ малала аталанасси хăй тĕллĕнех пулса пырĕ, тăшмансем кĕрешӳ хĕсăпăлне хăйсемех пăрахĕҫ, тесе шутлама пултараççĕ. Манма йурамасть, тăшманла, капиталисăмла йĕри тавралăх пур чухне, капиталисăмла государствăсен, пуринчен малтан фашисла государствăсен охранкисем ҫĕмĕрсе тăкнă експлоататăрла классен йулашкисене социалисăмла государствăна хирĕҫ кĕрешме пулăшаççĕ, малашне те пулăшса пырĕҫ, пирĕн ҫĕршыва шпионсем, сăтăрҫăсем, диверсантсем йараççĕ, малашне те йарса тăрĕҫ. Социалисăмла строй социалисăмлă государствă ҫирĕпленсе пырсан ҫеҫ ӳссе, аталанса пыма пултарать. Експлоататăрла классен хăйпăнчĕкĕсене хирĕҫ пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешсе пырсан ҫеҫ, троцкисла-бухаринла тата ытти шпионсемпе сăтăрҫăсене тĕпĕ-тымарĕпех пĕтерсе пырсан ҫеҫ социалисăм ҫирĕпленсе пыма пултарать.

Сталинла Конституци ĕҫе кĕни рабочи клас умне питĕ пысăк задачă—пĕтĕм ĕҫсыннисен нумай ӳснĕ политикăлă активлăхне йертсе пырас задачă лартать. Рабочи клас диктатури, рабочи клас общчĕствăна государствăла йертсе пыни социалисăмлă демократисăма сарса пынипе пĕртте хирĕҫле мар, а йăлтах урăхла, рабочи клас диктатурине ҫирĕплетсе пыни социалисăмлă демократисăм ӳссе пынине пĕлтерет, Сталинла Конституцин аслă принципĕсене пурнăҫа кĕртме кирлĕ пур условисĕче те тунине пĕлтерет. Рабочисемпе хресченсен социалисăмлă государстви рабочи клас диктатури вĕҫне ҫитичченех социали[illegible] демократи условийĕсенче мала[illegible] ҫирĕпленни пулса тăрать.

Буржуалă националиссене йăлтах кăкласа пăрахмала

А. Н. Никитина партирен кăларнă

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, çавăн пекех Тĕпĕçтăвком йапăх ĕçлени çине, вĕсем совет органĕсене начар йертсе пыни çинче парти организацийĕ пĕрре кăна мар кăтартса панă. Решенисем те сахал мар пулнă. Парти тасатувĕн итогĕсем çинчен йышăннă постановленире (1934 ç.) Тĕпĕçтăвкомпа Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çинчен пит те çирĕп каланă.

1934 çул вĕçĕнче парти Обкомĕн V-ĕш пленумĕ „Советсен отчотпа суйлав кампанин малтанхи итогĕсем тата йалсоветсен ĕçне организацилесси çинчен“ сÿтсе-йавса, каллех пит те конкретлă решени йышăнса хăварнă. Анчах çав решенисем хыççăн та Тĕпĕçтăвкомпа Халăх Комиссарĕсен Совечĕн практикинче мĕн чухлĕ те пулин палăрмала улшăну пулман. Вĕсем çаплах кивĕ йĕрпе чуптарнă, парти организацин решенийĕсене пурнăçа кĕртме шутламан. Парти организацин XVIII-мĕш облăç конференцийĕ хыççăн та ĕç лайăхланви сисĕнмест. Унтан та ытларах. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йертсе пыманнине пула тĕп учрежденисенче дисциплинă йăлтах шĕвелсе кайнă. Халăх Комиссариачĕсем васкавлă задинисенех ерни-ернипе, уйăхеуйăхĕпе пурнăçа кĕртмесĕр тытса тăраççĕ.

Йертсе пыракан совет органĕсен пуçĕнче халиччен ларнă çынсенчен урăххине кĕтме йавăр пулнă. Правителĕствă пуçĕнче халăх тăшманĕ Токсин ларнă. Ăна тăрă шыв çине кăлараччен парти Обкомĕ çапла шутланă: „кахалĕ нумай, пĕтĕм вăйа хурса ĕçлесшĕн мар, ĕçлеттермелле ăна“. Ку, паллах, пысăк йăнăш пулнă. Шаларах пăхмала пулнă. Шаларах пăхнă пулсан, Токсин çинчи маскăна сÿсе пăрахса, çав маска айĕнче тăшман пытанса пурăннине нумай маларах уçса палăртма май пулнă.

Хăшпĕрисем, тахçантанпах Токсинпа пĕрле ĕçленисем, Токсина тăрă шыв çине кăларас ĕçре парти организацине пулăшма пултарнă. Çăмахран, А. Н. Никитин. Вăл Чăваш парторганизацин малтанхи кунĕсенчен пуçласах йертсе пыракан вырăнсенче ĕçленĕ. Никитин Токсина кăна мар, тата ытти тăшмансене те тăрă шыв çине кăларас ĕçре парторганизацине пулăшма пултарнă. Никитин çавна туман. Туман, мĕншĕн тесен вăл хăй буржуалă националиссемпе ал урапах, урăхла каласан, организациллĕ те идейлă та çыхăнса тăнă.

Никитин контрреволюциллĕ буржуалă националиссемпе организациллĕ çыхăнса тăнине çакă питĕ лайăх кăтартса парат: вăл 1921—24 çулсенче „Вырăнти крайа тĕпчесе вĕренекен обществă“ текен организацире тăнă. 1929 çулти февралĕн 7-мĕшĕнче Никитин т. ыт. йертсе пынипе „Аслăлăхпа культура совечĕ“ организациленет. Çапла ĕнтĕ пĕр организаципе салатса йанă хыççăн, ун вырăнне тепри шăтса тухат. Çав тĕрлĕрен „общество“, „Канашсем“ вывеска çеç, контрреволюциллĕ организаци уçă формисем пулнă. Вĕсен хÿттинче Чăваш халăхĕн тăшманĕсен хăйсен ирсĕр те сăтăрлă ĕçне туса пурăннă.

Пĕр организаципе тăнă, йертсе пыраканĕсенчен пĕри пулнă çын, организаципе кам-кам тăнине тата вĕсем мĕн ĕçлесе пурăннине пĕлмелле: Никитин çавсене пĕтĕмпех пĕлсе тăнă. Анчах ниçта та пĕр çăмах уçса каламан. Парти организацийĕнчен пытарса пурăннă. Ку ĕнтĕ Никитин буржуалă националиссемпе организациллĕ кăна мар, идейлă та çыхăнса тăни çине кăтартса парат.

Тепĕр паллă тĕслĕх те çавăн çинех кăтартса парат. Чăваш парторганизацийĕ елменĕшчинăпа хирĕç хăварран кĕрешнĕ вăхăтра Никитин мĕн пурĕ те пĕр хут кăна тухса каланă. Вăл та пулин асав шăллă националиса А. Михайлова хÿтĕлесе калани пулнă. Çавсем пурте Никитин буржуалă националиссемпе пĕр шухăшлă, пĕр каварлă пулни çинчен, вĕсемпе идейлă çыхăнса тăни çинчен калаççĕ.

Хăй вăхăтĕнче тăрă шыв çине кăларнă тăшмансем те чылай вăхăт хушши хăйсен вырăнĕнче йулма пултарни халĕ ĕнтĕ уççăн куç умне тухса тăрат. Вĕсене Токсинсем, Никитинсем, Кузнецовсем, Харитоновсем хÿтĕлесе пурăннă. Националиссем çавсен çунатти айĕнче ăшăнса пурăннă, ăçта май килнĕ çавăнта сăтăр тунă. Никитин вырăнĕсене питĕ сахал пулнă, совет кадăрĕсене пĕлмĕн, вĕсен пурнăçĕпе интересленмен. Ун вырăнне вăл Кошкински пек чи усал тăшмансене ăшăтса пурăннă. Вилĕм кÿрекен тăшмансене — Серебрйаковсене, Дробниссене, Блюмсене т. ыт. те „пирĕн çавнă тусĕсем“, тесе каланă.

Националиссемпе пĕр лагĕрте тăнă Никитина тăрă шыв çине кăларнă май Кузнецован ирсĕр ролĕ йар-уççăн тухса тăрат. Вăл парти организацине историне çырма чух Никитин çинчен шăл шурри те уçман. Кузнецов аллинче материалсем пулман тесе шутлама нимĕнле май та çук. Кузнецовăн ухтармаа архив хăвармансерĕн, Никитина тăрă шыв çине кăларакан материал пулнах. Анчах вăл çав материалсене çут çанталăка туртса кăларман. Мĕншĕн тесен Кузнецов хăй буржуалă националиссемпе пĕр кăвапаран çыхăнса тăнă. Вăл çăмахпа буржуалă националиссене çунтарам пек тунă, çав хушăрах ĕçре вĕсене хÿтĕлесе тăнă. Унăн çăмахĕсем ирсĕр ĕççене витсе тăракан пĕркенчĕк пулнă, урăх нимĕн те мар. Обком бÿровĕ Никитин кивĕ составĕ Кузнецова хăй хÿттине илсе кăçарма çук пысăк йăнăш тунă. Партийĕ Контроль Комиссийĕн Уполномоченнăйĕ парти организацине, Обкома хăйне те пулăшма тăрăшнине тĕрĕс ăнланса илнĕ пулсан, паллах, çав йăнăш пулман пулĕччĕ.

Октабĕрĕн 13-мĕшĕнче Обком бÿровĕ Никитин çинчен тăракан ыйтуна пăхса тухрĕ. Никитин хăйĕн çинчен ку таранччен мĕнле пытарса пурăннă, халĕ те çавăн пекех пытарма тăрăшрĕ, ăпра мĕн пуррине уçса кăтартмарĕ. Анчах темĕнле тăрăшсан та пытарма май çук, фактсем куç умĕнче тăраççĕ. Обком бÿровĕ Никитина тĕпĕçтăвком председателĕнчен те, партирен те кăларса пăрахрĕ. Унсăр пуçне çав ĕçпе çыхăнса тăракан А. Йаковлева тата С. Коричева ĕçрен кăларса, пуçламĕш организацисене вĕсен партилĕхĕ çинчен пăхса тухма хушрĕ.

Ку ĕнтĕ парти организацийĕшĕн чăннипех те пысăк урок пулса тăрат. Урок чи малтан çакăн çине кăтартса парат: буржуалă националиссем, троцкисла-бухаринла йулнă бандăпа çыхăнса каланăскерсем, пытанса питĕ вăртăн ĕçленĕ, вĕсем пысăк вырăнсенче ларса авторитетлă органсене йачĕпе витĕнсе пурăннă, чăваш халăхне сахал мар сăтăр тунă. Вĕсенчен чылайĕшне тăрă шыв çине кăларнă ĕнтĕ, анчах пурне те мар-ха. Большевиксен сыхăлăха татах та татах вăйлатса, халăх тăшманĕсене — троцкисла-бухаринла бандитсене тата вĕсемпе çыхăнса ларнă буржуалă националиссене йăлтах тăпах шыв çине кăларса кăкласа пăрахмала. Çавăнпа пĕрлех тăшмансен сăтăрлă ĕçĕсен йулашкисене уçса паларта, вĕсене хăвăрт пĕтермеле, пĕтĕм вăйа умра пĕтараккан пысăк задачăсене пурнăçа кĕртме мобилизацилемеле.

Абрамăв растратчиксене хÿтĕлет

ТРАК. Карайри „Комсомол“ чăпта ертелĕн правленинче растратчиксем йăва çавăрнă. Правлени председателĕ Иван Тинйаков ертел укçине 400 тенкĕ хăй кăсйине чикнĕ. Бухгалтĕр пулнă Филиппов 1288 тенкĕ те 50 пус растратă тунă. Ертел правленинче ĕçлекенсем мĕн пурĕ 2100 тенкĕ ытла растратă тунă.

Кусем çинчен ревизи комиççи председателĕ Абрамов лайăх пĕлсе тăрат. Анчах вăл растратчиксене ответ тыттарас тĕлĕшпе нимĕн те туман, тума та шутламаст. Абрамов растратчиксене çăлса хăварма пулса, Тинйаковран 30 метр çицă тата 250 тенкĕ укçа илнĕ.

Хавваслă çемйе

Çиккасси (Канаш р.) йалĕ Октабĕр революцин тивлечĕпе кашни çулах ÿссе пырат. Йалта культурлăх сăн-сăпачĕ вирлĕн саралат. Халĕ йалта клуб, вулав çурчĕ, больницă, йалпо, вăтам шкул пур. Кăçал колхозниксем ĕç кунĕ пуçне 10-шер килограма йахăн тĕштырă илеççĕ. Йалта колхозниксем ырă пурăнăçпа, Сталин йулташ панă телейлĕхпе савăнса пурăнаççĕ.

Акă, Попов Васильин çемйине илер. Унăн çемйинче пурĕ 5 çын. Попова Натали 28 çулта. Вăл чăвашла йурăсене 32 йурă пĕлет, Попов Петр 13 çулта—вăл балалайкăпа 35 йурă çăмăлăн выльат, Попов Николай 6 çулта—ташă, йурă мастăрĕ, пурĕ 10 йурă йурлат, 6 вăвă калама пĕлет. Попов Владимир 3 çулта, вăл та 6 йурă йурлама вĕреннĕ. Çак хавваслă çемйе йалти вечĕрсенче час-часах хăйĕн пултарулăхне кăтартса парат. Районри радиофестиваль смотăрĕнче ку çемйе пысăк авторитет илчĕ, республикăри радиофестивальне те пысăк хавваслăхпа хутшăнчĕ.

Хор Октăбĕр уйавне хатĕрленет

Канашри вакунсем йусакан заводра Нечайев йулташ тăрăшнипе 45 çынтан рабочисен хорĕ организациленĕ. Хорта хĕрарăмсем 24 çын, арçынсем 21 çын, пурте чăвашсем. Вăл шутран 17 çын производствăри стахановçăсем. Хора кăçал йанвар уйăхĕнче анчах организациленĕ пулсан та, унăн авторитечĕ хăвăрт ÿссе пырат. Хор халĕ 45 йурă йурлама вĕреннĕ. Заводри клубра 15 концерт панă. Шупашкарти радиосаракан станци урлă 4 хут йурланă. Хор кăçалхи радиофестивалĕн районри смотăрĕнче хăйĕн пултарулăхĕпе 1-мĕш вырăн йышăннă. Кунсăр пуçне чукунçул çинчи рабочисен Пĕтĕм Союзри олимпиадинче те паллă вырăн йышăннă. Иртнĕ хĕлте хор Мускавра Аслă театрта пĕр хут концерт панă, Хусанра пысăк предприйатисенче те пулнă.

Хор Октăбĕр революци уйавĕ 20 çул тултарнине хастарлăн хатĕрленет. Занятисем икĕ кунта пĕр хут пулса иртеççĕ. Халĕ çĕнĕ йурăсем вĕренеççĕ. Ив. Малов.

Чукунçул строителствинчи стахановла вунăкунлăх

Скробовпа Тарасов бригадисем пек ĕçлемеле

Чукунçул строителствинчи стахановла вунăкунлăхра 620 пин тенкĕлĕх ĕç туса, çулталăкри плана тултарассине 5,5 процент ÿстернĕ. Çентăбĕр уйăхĕпе танлаштарса пăхсан вунăкунлăхра улшăнусем туни курăнат. Анчах вунăкунлăх планне тултарнине илсен, вăл улшăнусем пачах та çителĕксĕр пулни палăрат. Вунă кун хушшинче 2147 пин тенкĕлĕх ĕç тумала пулнă пулсан, ăна 29,4 процент çеç пурнăçа кĕртнĕ.

Строителствăри участкăсенчен пилĕкĕмĕшпе Çĕрпÿ станцине тăвакан участкăсем вунăкунлăх планне 60 процента йахăн тултарнисĕр пуçне, пĕр участкă та хăйĕн планне 27 процентран ытла тултарайман.

Вунăкунлăх стройкăри командирсем стахановла йухăма пуçарса, йертсе пыма пĕлменнине тата стройкăра производствăлă çитменлĕхсем нумай пулнине кăтартрĕ. Участкă руководителĕсем ĕçе йĕркелĕ организацилемен пирки пĕрпĕрне чăрмантарса пынă. Акă висçĕмĕш участкă начальникĕ Дашков лини хывма тăпра купалас ĕçе йурийех вăрăма чăсса пырса 8 мĕш участкăна (рельсăсем хывассине) чăрмантарса пынă. Вăлах хăйĕн участкинче пулнă тракторлă скрепарсене пĕррĕмĕш участкăна йанă чухне çунтармали йапаласем памасăр кăларса йанă. Çавна пула тракторсем икĕ кун хушши çул çинче ларнă. Дашков иккĕмĕш участкăра ĕçлекен „ППГ“ екскаватăр патĕнче ĕçлеме самосвалсем йарассине тытса тăрса, екскаватăра йĕркелĕ ĕçлеме чăрмантарнă. Дашков киревсĕр ĕçлени çинчен калакан фактсем темĕн чухлех илсе кăтартма пулат.

Стахановла вунăкунлăха иртерессине организацилеменшĕн тата управленинчен панă кăтартусене пурнăçа кĕртсе пыманшĕн Дашкова партирен тата ĕçрен кăларнă.

Иккĕмĕш участкăри командирсем ĕçе йĕркелес тата рабочисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе пачах та ĕçлемен. Прораб помошникĕ Молчанов рабочисен пурнăçпа йăлă ыйтăвĕсем çине чунсăр пăхнине пула, Йĕтĕрне районĕнчен пынă колхозниксем уçă пĕлĕт айĕнче пурăннă. Ку участкăра ĕçлекен колхозниксене вутă тата шыв та кирлĕ таран тупса паман. Колхозниксен ыйтăвĕсем çине çакнашкал чунсăр пăхнишĕн, управленинчен панă кăтартусене пурнăçа кĕртсе пыманшăн Молчанова ĕçрен кăларса унăн ĕçне суд аллине памала тунă.

Строителствăна ĕç вăйĕ организацилесе пулăшас тĕлĕшпе районсенчи партипе совет организацисем те кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕсĕр пуçне нихăш район та хăй çине илнĕ обйазателствăна пурнăçа кĕртмен.

Стахановла вунăкунлăхра нумайĕшĕсем паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Алексейĕв йулташ йертсе пыракан платниксен бригади плана 204 процент тултарнă. Çавнашкалах камĕнщиксен Шильчиков бригади 200 процент, Скробов бригади 196 процент, çĕр чавнă çĕрте ĕçлекен Тарасов бригади 200 процент, кăмакасем тăвакан Трубин йулташ 190 процент, Шабалин 161 процент тултарнă.

Стахановла вунăкунлăх Октăбĕрĕн 20-мĕшĕччен пырат. Участкă руководителĕсен тата районри организацисен малтанхи вунă кун хушшинче палăрнă çитменлĕхсене пĕтĕмпех хисепе илсе малашне пысăк хăвăртлăхсемпе ĕçлеме кирлĕ вывăдсем тумала. Строителсем умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Строителсен Октăбĕр уйавĕччен чукунçул линине хывма тăпра купалас ĕçе пĕтĕмпех пурнăçа кĕртмеле, кĕперсем, трубасем туса çитермеле, т. ыт. те.

Ку ĕççене пурнăçа кĕртме пур кирлĕ условисем те пур. Строителствăри командирсем большевикла йертсе пыни, ĕçе тĕрĕс организацилени кирлĕ. Çавăнпа строителствăри руководителсен хăйсен ĕçĕсене халех стахановла йухăма анлăн вăйлатса пырас май çĕнетсе йĕркелемеле.

Розанов.

„Чăваш Коммунĕ“ тата „Красная Чувашия“ хаçатсен йачĕпе пулса иртнĕ спартакиадăра.
ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Участниксем старт умĕн.

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Пĕр йалсоветĕнчи колхозсем

ТРАК. Карай йалсоветĕнчи колхозсем чукунçул тăвас ĕçе активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. „Хĕрлĕ çăлтăр“ колхозăн 1320 кубла метр çĕр чавса турттармала пулнă пулсан, пайанхи куна 1371 кубла метр чавса турттарнă. Колхозниксем малашне тата та ĕçлетпĕр, теççĕ. „Войков“ колхозĕ 600 кубла метр çĕр чавса турттарас вырăнне, 610 кубла метр чавса турттарнă.

Çапла Карай йалсоветĕнчи тăватă колхозран виçĕ колхоз хăйсен планĕсене ытлашшипех тултарчĕç. Çав вăхăтрах „Большевик“ колхоз начар ĕçлерĕ. Вăл 1500 кубла метр çĕр чавса турттарас вырăнне 765 кубла метр çеç чавса турттарнă.

И. П.

Çителĕксĕр ĕçлени палăрчĕ

ЕЛĔК. Октăбĕрĕн 10-мĕшĕнче районри вулав çурчĕсен пуçлăхĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали Положенине“ ĕççынниcене ăнлантарса парас ĕçе вулав çурчĕсен пуçлăхĕсем мĕнле йĕркелесе пынипе Аслă Социалисăмлă революцин 20-мĕш уйавне хатĕрленесси çинчен сÿтсе-йаврĕç.

Мăн Вылă йалсоветĕнче (вулав çурчĕн пуçлăхĕ Табов) малтанах „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали Положенине“ вĕренес тĕлĕшпе колхозниксемпе йединоличниксен пуххисенче 14 хутчен калаçусем туса иртернĕ. Кун хыççăн йалсовет çумĕнче йалти учителсемпе активсене пуxса кружок организациленĕ. Кунта 20 çын вĕреннĕ. Пĕтĕмпе 4 занятти пулнă. Çак кружокран вĕренсе тухнисем халĕ йалсенчи колхозниксемпе йединоличниксене суйлав саккунне ăнлантарса пама тытăннă. Мăн Вылă йалĕнче 10 кружок ĕçлет. Кружоксенче занятисем йĕркелĕ пулса пыраççĕ, ку вăхăта çитиччен 4-шар занятти пулса иртнĕ ĕнтĕ. Ку йалта кружоксене çÿремен старицсемпе карчăксене пухса уйрăмăн калаçусем туса иртереççĕ.

Анчах ытти йалсенче суйлав саккунне вĕренесси кирлĕ пек пулса пымаст-ха. Çиркасси йалĕнчи 3 кружокран пĕри те йĕркелĕ ĕçлемеççĕ.

Йефремкасси йалсоветĕнче ĕç татах та начар пулса пырат. Вулав çурчĕн пуçлăхĕ Волков ĕçе тивĕçлипе йĕркелесе пымаст.

Ку йалсоветра учителсемпе тата йалсовет аппаратĕнче ĕçлекенсемпе семинар туса иртернĕ. Семинарта 11 çын пулнă. Кун хыççăн çав çынсене уйрăм йалсем çумне кружоксене йĕркелесе пыма çирĕплетнĕ. Анчах халĕ вăл çынсем пĕри те кружоксем организацилесе халăха вĕрентме тытăнман. Çапла вара кунта 800 ытла суйлавçăран 120 суйлавçăна кăна суйлав саккунĕ çинчен кăшт каласа панă. Вĕсем те суйлав йĕрки çинчен çителĕклĕн пĕлмеççĕ.

Çавнашкалах Матăк, Писĕп, Йархуньушкĕн йалсовечĕсенче те суйлав Положенине вĕренессине тивĕçлипе йĕркелесе йаман. Кружоксем ĕçлемеççĕ.

Хăшпĕр вулав çурчĕсен пуçлăхĕсем хăйсем те „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали Положенине“ тĕплĕн пĕлмеççĕ. Писĕп йалсоветĕнчи вулав çурчĕн пуçлăхĕ Крикова йулташ суйлав саккунĕ çинчен хăйте сахал пĕлет.

— Кашни граждании миçе бÿллетенпе сасăлат?—тесе ыйтсан, вăл:

— Пĕррепе,—тесе ответлет.

Крикова хаçат-журналсем те вуламаст.

Районри сутĕç пайĕ вулав çурчĕсен пуçлăхĕсене çителĕксĕр йертсе пырат. Райсутĕç пайĕн пуçлăхĕ Антонов йулташ учителсемпе çеç ĕçлет, вулав çурчĕсен пуçлăхĕсемпе ĕçлемест.

Вулав çурчĕсен пуçлăхĕсем суйлав саккунне ĕççынниcене ăнлантарса парас ĕçе анлăн сарса пыма, Октăбĕр уйавне хатĕрленес ĕçе вирлĕн пуçарса пыма хăйсем çине татăклă обйазателствăсем илчĕç.

Ф. Филиппов.

Совет çĕршывĕн сывлăх çурчĕсемпе вырăнĕсем

Пирĕн çĕршывăн сăрчĕсенче, вăрманĕсемпе çеçенхирĕсенче, тинĕс хĕррисенче çанталăкпа ÿсен-тарансем тĕлĕшĕнчен тĕлĕнмеле вырăнсем пур. Хĕвеланăç Йевроппăн чапа тухнă курорчĕсем çанталăк тĕлĕшĕпе, усăлă çăлкуçĕсен пуйанлăхĕ тĕлĕшпе вĕсемпе танлашаймаççĕ. Анчах патша влаçĕ çав пĕтĕм тĕлĕнмеле çăлкуççене ĕçхалăхĕнчен çирĕп питĕрсе пурăннă. Патша Российĕнчи курортсем сановни чиновниксемшĕн, хуçасемшĕн, банк хуçисемшĕн çеç пулнă. Донбасра, тĕслĕх илсен, революциччен пĕр Славйански курорт çеç пулнă. Кунта кашни çулах Шабелски граф, Орбелианк княçĕсем, шаховски тата çавсене майлă обшествăсен „хăймисем“ пухăннă. Архив докуменчĕсем 1914 çулхи май-ийунь уйăхĕсенче курортра 205 çын канни çинчен кăтартса параççĕ. Вĕсем хушшинче 35 çĕрулпучĕ, 39 сановни чиновник, 8 тĕн çынни тата 57 çурт тытакан хуçасем пулнă.

1920 çулхи декабĕрте, çамрăк совет çĕршывĕ белогвардейцăсемпе тата йутпатшалăх тăшманĕсемпе çапăçнă вăхăтра, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ В. И. Ленин алă пуснă декретпа ĕлĕк пысăк çĕрулпучĕсемпе капиталиссем усă курнă чаплă дачăсемпе канмали уйрăм вырăнсене, ĕлĕкхи патша тата аслă княççем дворецĕсене рабочисемпе хресченсем валли санаторисем тата сывлăх çурчĕсем туса усă курма палăртнă. Çав вăхăтран вара канаç прави Совет халăхĕн никам пăсайми прави пулса тăнă. Иртнĕ çултах совет влаçĕ йусаса çĕнетнĕ тата çĕнĕрен тунă 28 государствă курорчĕ, 161 вырăнти курорт тата 290 курортлă сыватакан вырăн шутланнă.

III мĕш Александр дворецĕ пулнă Йалтта çывăхĕнчи „Пролетарское здоровье“ санаторинче çулленех пин таран ĕççынни сывалат. Романăвсен пулнă Ливади дворецĕсенче пысăк санатори комбиначĕ тунă. Кунта кашни уйăхрах 750 çын хăйĕн сывлăхне çирĕплетет. Мисхорти Сергей Александрович княç дворецĕ пулнă çуртра 150 çын вырнаçмалăх „Харакс“ санаторийĕ тунă. Одессăн генерал-губернатăрĕ Шувалов сĕмсĕр деспот Алупкăра дворец тытнă. Халĕ кунта „10 летие Октября“ йатлă санатори пур. Массандрăри III-мĕш Александрăн резиденцийĕ пулнă çĕрте туперкульоз институчĕ-санаторийĕ, унта 150 чирлĕ çын сывалат. Ĕлĕкхи Чернов дачинче, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ историллĕ декрет кăларнă çул, пирĕн çĕршывра пĕррремĕш канмали çурт тунă. Халĕ Ленин хули тавра Пĕтĕм Союзри профсойусен Тĕп Совечĕн 55 канмали çурчĕсем вырнаçса ларнă. Вĕсем Петергофра, Сиверскинче, Луга çывăхĕнче, Киров утравĕсем çинче илемлĕ вырăнсенче лараççĕ.

Канмали çуртсем, санаторисем тата канмали кун базисем валли укçа уйăрасси ÿсни ĕçхалăхĕшĕн сталинла тăрăшнине питĕ уççăн кăтартса парат. Профсойусен социалли страховани бюджечĕ тăрăх, кăçал çавăн пек канмали çуртсем 884 мĕлйун та 500 пин тенкĕ, иртнĕ çулхинчен 265 мĕлйун та 500 пин тенкĕ ытларах расхутлаççĕ. 1937 çулта канмали çуртсенче 2 мĕлйун çын ытла канат. Кун çумне тата вырăнти санаторисенче 268 800 çын, Союзри курортсенче 83 300 çын каннине хушмала. Кунсăр пуçне кăçал канмали кун базисенче пулма пĕр мĕлйун та 630 пин путовкă параççĕ. Çапла вара сывалмали учрежденисенче пулнă профсойуз членĕсен пĕтĕм шучĕ пысăк хисепе — 4 мĕлйуна çитет. Профсойусен 625 канмали çурт тата 210 санатори пур. Халĕ 67 çĕнĕ канмали çурт тата 12 санатори тăваççĕ. Чылайĕшĕ вĕсенчен ĕçлеме тытăннă та ĕнтĕ.

Йатарласа тунă канмали çуртсемпе санаторисем питĕ нумайланаççĕ. Халăх Мускав çывăхĕнчи Архангелскри Йусупов княç дворецне Хĕрлĕ Çар командирĕсене панă. Мурманскри çуртсене пурăнмала çуртсене тара паракан 1 №-лĕ кооперативлă йулташлăх Туломă йуханшыв хĕрĕнче хăйĕн членĕсем валли канмали çурт усnă. Ленинград çывăхĕнчи илемлĕ Берногордовкăра Орджоникидзе йачĕпе тăракан завод канмали çурт уснă. Кунта кăçал сакăр уйăх хушшинче 1220 çын каннă. Зеленай хулара—дачăлă вырăнта Горьки облаçĕнчи учителсем валли 135 çын вырнаçмалăх канмали çурт туса çитереççĕ. Сенеж кÿлли хĕрĕнче шоферсен канмали çуртне туса çитернĕ, Украйинăра Донцă хĕрĕнче йăвăр машиностройени рабочисем валли 150 çын вырнаçмалăх канмали çурт çитĕнсе ларнă т. ыт. те.

Колхозниксем валли канмали çуртсемпе санаторисем тăвасси те пирĕн çулран çулах ÿссе пырат. Днепропетровск облаçĕнче Волчйа йуханшыв çывăхĕнче Покровск районĕнчи колхозниксем валли канмали çурт тунă. Канмали çуртсем Орехов, Рот-Фронт тата Красноармейск районĕсенче пур. Генически хула тулашĕнче Азов тинĕс хĕрĕнче колхозниксем валли виçĕ хутлă санатори тăваççĕ. Белоруççи Сывлăх Халăх Комиссариачĕ колхозниксене Совет Союзĕнчи канмали çуртсене тата аван санаторисене кайса канма 570 путовкă панă. Мари Республикинче Минашкинскра радиоактивлă çăлкуçĕ тупнă, унта колхоз санаторийĕ усnă.

Иртнĕ çул Сталин йачĕпе тăракан автозавод рабочисем канмали çуртсенче пулма 3200 икĕ ернелĕ путовкă, санаторисенче пулма 450 путовкă илнĕ. Кăçал автозавод рабочисем 4000 икĕ ернелĕ путовкă тата куротсене 600 вырăн илнĕ те ĕнтĕ.

Куйбышев йачĕпе тăракан електрокомбинат рабочисем валли Мускав çывăхĕнчи канмали çуртсенче пулма 2000 путовкă тата санаторисенче пулма 200 путовкă илнĕ. Челйабинскри трактăр заводĕнчи рабочисем валли ултă мĕлйуна йахăн тенкĕлĕх путовкă илнĕ.

Совет правителствi ача амăшпе ачан канăçĕшĕн питĕ хытă тăрăшат. Кăçал Хусан, Минск, Иваново, Свердловск, Мускав, Харьков, Макеевка хулисем таврашĕнче йăвăрланнă хĕрарăмсене валли тунă 9 канмали çурт ĕçлеме тытăнат. Мускавра, Алма-Атăра, Мариупольре тата ытти хуласенче 6 канмали çурт йĕркелеме тытăннă.

Евпаторинчипе Артекри ачасен санаторийĕсем пĕтĕм тĕнчене пĕлмеле аван ĕçлеççĕ. Кăçал Дагестанри Гуниб çÿлĕ ту çывăхĕнче шăмă туберкульозĕнчен сыватмали ачасен санаторийĕ усăлнă. Ленинград патĕнче Тойца станци çывăхĕнче йатарласа тунă шкул санаторине уснă. Кольски çурутравĕн пĕр илемлĕ кĕтесĕнче, Имандра кÿлли çинче ача санаторийĕ тунă. Ку санаторинче кăçал пин ача канат. Днепр хĕрĕнче Речицăран 25 километрта Белоруççи ачисен сывлăх çурчĕсене туса çитернĕ. Архангелск çывăхĕнче полярниксен ачисемпе Нарйан Мартан килекен пĕчĕк ненцăсем валли канмали çурт уснă.

1937 çулта нумай çĕнĕ санаторисем тунă, курортсем йусаса аванлатнă, çĕнĕ çăлкуççем ăнăçлă тыраса тупнă. ССР Союзĕн Сывлăх Халăх Комиссариачĕ курортсем тума 49 мĕлйун та 600 пин тенкĕ укçа пĕтернĕ. Советăн Сочи—Мацеста аван курорчĕ пĕтĕм тĕнчипех чаплă шутланса тăрат. Кунти чаплă дворецсенче-санаторисенче социалисăмла ĕçĕн пиншер геройĕсем—стахановçăсем, вĕренÿçĕсем, Хĕрлĕ Çар командирĕсем канаççĕ тата сывалаççĕ. Тĕлĕнмеле чаплă Грузи—Цхалтубо курорт, Крымăн кăнтăр хĕрĕнчи курорчĕсем Пĕтĕм Союзĕпе палăрмала ĕçлерĕç. Вĕсене тума вуншер мĕлйун тенкĕ укçа хывнă.

Совет государстви халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташăн задачисене пурнăçа кĕртсе хăйĕн мĕлйун граждăнĕсен сывлăхĕшĕн çапла тăрăшат.

Пирĕн çĕршывăн рабочи класĕ кĕрешсе илнĕ пысăк ĕçсем-Сталинла Конституцийе çирĕплетнĕ канăç прави çапла пурнăçа кĕрсе пырат.

(ТАСС).

Пысăк вăй

Республикăри фабриксемпе заводсенче, колхозсенче, йалсоветсенче, учрежденисемпе шкулсенче темиçе çĕр стена хаçачĕ тухса тăрат. Вĕсене темиçе пин ĕççыннисем — ĕçйалкорсем кăларса тăраççĕ.

Колхозсенчи стена хаçачĕсем колхозсене большевикла çирĕплетме, тăшмансене тупса пĕр çын хăвармиччен пĕтерме партипе совет оргăнĕсене пулăшаççĕ. Стена хаçачĕсем колхозсенче социалисăмла ăмăртува организацилеме пулăшнă, халĕ те хастарлăн пулăшаççĕ. Фабриксемпе заводсенчи тата учрежденисемпе шкулсенчи стена хаçачĕсем пирĕн кулленхи ĕçре питех те пысăк вырăнта тăраççĕ.

Парти организацийĕсем вырăнти пичет пе ĕçйалкорсене чăннипех сталинла йертсе пынă çĕрте, стена хаçачĕсемпе ĕçйалкорсем Сталинла Конституципе çĕнĕ Суйлав саккунĕн матур агитатăрĕсемпе пропагандисĕсем пулса тăраççĕ. Çак пысăк вăйа парти организацисем хăйсен аллине илсе, большевикла йертсе пынă çĕрте, стена хаçачĕсемпе ĕçйалкорсем партипе совет влаçĕн шанчăклă помощникĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсем социалисăм строителствине малала йарассишĕн, тăшмансене хирĕç хайаррăн кĕрешсе пиççе, çирĕпленсе пыраççĕ. Стена хаçачĕн редактăрĕсемпе редколлеги членĕсем тата ĕçйалкорсем—вĕсем партире тăракан тата партире тăман большевиксем, партипе совет влаçĕн ĕçĕсемшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекенсем. Çак активпа ĕçлесен вĕсене йертсе пырасси суйлав кампанинына вăхăтра уйрăмах пысăк вырăнта пулмала. Пирĕн çак пысăк вăйпа тăшмансене хирĕç кĕрешме, ССР Сойузĕн Аслă Советне тата ĕççынни депутачĕсен вырăнти совечĕсене хамăрăн социалисăмла тăван çĕршывăн чи лайăх, чи пархатарлă, чи шанчăклă çыннисене суйлама мобилизацилемеле. Вĕсене большевикла агитатăрсем, пропагандиссем, организатăрсем тумала. Ку вăл парти организацисен халĕ тумалли чи пысăк ĕçĕсенчен пĕри.

Анчах пирĕн парти райкомĕсемпе районти хаçат руководителĕсем нумайĕшĕ вырăнти пичетĕн пысăк вăйне халĕ те ăнланса илмеççĕ. Çавăнпа та вĕсем колхозсенчи, учрежденисенчи, фабриксемпе заводсенчи стена хаçачĕсем, ĕçйалкорсем çине çавăрăнса пăхмаççĕ. Çакăнпа хăшпĕр çĕрте фашиссен троцкисла-бухаринла шпионĕсемпе бандисем усă курнă. Вĕсем хăйсен таса мар аллипе вырăнти пичете çавăрса илме тăрăшнă. Халăх тăшманĕсем вырăнти стена хаçачĕсене тĕрлĕ майсемпе пĕтерсе пынă, критикăпа самокритикăна хĕснĕ, стена хаçат редколлегисен составĕсене тăшманла етемсене кĕртме тăрăшнă. Çапла тунипе большевикла пичетĕн авторитетне ĕçхалăх массисем умĕнче пĕтерме хăтланнă.

Çапла, Çĕрпӳ районĕнчи „Колхоз çулĕпе" хаçат редакцине кĕрсе кайнă халăх тăшманĕ Дубровски районти колхозсенчи стена хаçачĕсен ĕçĕсене пĕтерсе пынă. Колхозсенче стена хаçачĕсем тухма чарăннă. Тăшмансем çакна стена хаçачĕ кăлармa пултаракан редактăрсем çук, тесе ăнлантарма хăтланнă. Çав вăхăтрах пирĕн колхозлă йалта пултарулă, талантлă йалкорсем, партипе совет влаçĕн ĕçĕсемшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекенсем çĕршер çын пур. Вĕсем стена хаçатне йуратса кăлараççĕ, ку ĕçе колхозниксене хастарлăн хутшăнтараççĕ.

Пирĕн стена хаçачĕсен кадăрĕсем: фабриксемпе заводсенчи рабочисем, стахановцăсемпе ударниксем; колхозсенче—колхозник-ударниксем, стахановцăсем. Парти организацисен задачи çав ӳссе пыракан кадăрсене йертсе пыни, вĕренме пулăшни пулат. Çапла тусан, пĕр стена хаçачĕ те редактăр, редколлеги, йалкор çуккипе аптăрамаст. Çакна пире пурнăçри ĕçсем лайăх ĕнентереççĕ. Акă Йетĕрне районĕнчи „Правда" колхозра, Вăрмар районĕнчи „Партин 16-мĕш сйесĕ" колхозра икĕ-виçĕ çул кайала стена хаçачĕсем йĕркелĕ тухман. Анчах кунти колхозри пултарулă çынсем Григорйев тата Мефодйев йулташсем çине тăрсах ĕçлеме тытăнсан, стена хаçачĕ кăларасси—колхозри чи кирлĕ ĕç пулса тăнă. Халĕ колхозниксем хăйсен хаçачĕсем çине пĕрмайах çырса тăраççĕ, йуратса вулаççĕ. Хаçатсем тăшмансене хирĕç хайаррăн кĕрешеççĕ, тӳрĕ ĕçлекен колхозниксен интересĕсене хӳтĕлеççĕ. Колхозсенче лайăх тухса тăракан, массăна Сталинла Конституципе Суйлав саккунне лайăх ăнлантарса паракан хаçатсем пирĕн сахал мар.

Кашни фабрикра, заводра, колхозра, учрежденире, шкулра лайăх стена хаçачĕ кăларма пулат. Большевикла стена хаçачĕсем кăларасси парти организацисемпе хаçат редакцийĕсенчен килет. Вĕсен стена хаçачĕсене, ĕçйалкорсене йертсе пырассине, вĕсене пулăшассине вăйлатмала, вара ĕç малала кайат.

Партин кашни райкомĕн, районти хаçат редакцин хисеплĕ ĕçĕ, малтанхи обйазăннăçĕ—вăл хăйсен районĕнчи стена хаçачĕсемпе ĕçйалкорсене большевикла йертсе пырасси тата ĕçпе пулăшасси пулат.

Стена хаçачĕсемпе ĕçйалкорсен çарĕн обйазăннăçĕ—тăшмансене пĕр çын хăвармиччен тупса пĕтерме, совета хирĕçле агитацине çапса аркатма партипе совет организацисене пулăшасси, тăшмансем Аслă Советăн суйлавĕ вăхăтĕнче хăйсен киревсĕр ĕçне тума хăтланнине сĕмĕрсе такасси пулат.

Стена хаçачĕсемпе ĕçйалкорсен хисеплĕ ĕçĕ—вăл хуларипе йалти мĕн пур ĕççыннисене ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама Ленин—Сталин парти йалавĕне илсе кайассишĕн кĕрешесси пулат. Çак ĕçре вĕсен партин чи çивĕч, чи вăйлă хĕçпăшалĕ, большевикла агитатăр, пропагандист, организатăр пулмала. Çавăнпа та парти комитечĕсен стена хаçачĕсемпе ĕçйалкорсене йертсе пырассине большевикла организацилемеле.

Райĕçтăвкомсемпе йалсоветсем отчот тăратас йĕркене улăштарнă

Йалсоветсенче 1937 çулхи ийулĕн 1-мĕшĕнчен налогсене, страховкă укçисене шутласа хурас тата пухас, натурăна тăратмали обйазателствăсене йĕркелесе пырас ĕçрен хăтарасси çинчен 1937 çулхи мартăн 21-мĕшĕнче йышăнвă постановленипе килĕшсе, ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулхи çентаберĕн 27-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕнче йалсоветсемпе райĕçтăвкомсен вăхăтран вăхăта отчот тăратмали формăсенчен (ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1936 çулхи йанварĕн 29-мĕшĕнче йышăнвă постановлени, ССР Сойузĕн саккунĕсен сборникĕ, 1936 ç. 5-мĕш №, ст. 42) çак формăсене кăларса пăрахмала тунă:

Йалсоветсен отчочĕсенчен укçатенкĕ пухас йенĕпе тăратмали отчота кăларса пăрахнă. Вăл шута пур хуçалăхсенчен те самообложени тата йалхуçалăх налогĕ йенĕпе шутланакан парăмсене тата йалхуçалăх налогне шутласа хурассипе укçа пырса кĕнине шута илсе пырас, культсбор шутласа хурассипе укçа пырса кĕнине тăратас, государствăн обйазателни окладлă страхованийĕ йенĕпе укçа шутласа хурас, страховкă тӳлевĕсем пырса кĕни тата ку йенĕпе льготăсем пани çинчен тăратас, обйазателни окладлă страхованине шутласа хурас результачĕсене (малтанлăха) тăратас отчотсем тата аш-какай, çу, сĕт тăратас хăйĕн обйазателствисене срукра тултарман хуçалăхсем çинчен тăратас сводкă тата çавăн пекех çăм йенĕпе тултарман хуçалăхсем çинчен тăратас, тавлашусăр йĕркепе тултармали обйазателствăсен, натурăпа тата штрафсен тултарман пайĕсене шыраса илесси çинчен тăратас сводкăсем кĕреççĕ.

Райĕçтăвкомсен отчочĕнчен самообложени шутласа хурас результатсем çинчен (почтăпа) тăратас тата самообложени шутласа хурас результатсем çинчен (телеграфпа) тăратас отчотсене тата йалсовет секретарĕсене курссем витĕр кăларни çинчен тăратас отчота кăларса парахнă.

Ун вырăнне райĕçтăвкомсен вăхăтран вăхăта тăратмали отчотсен çĕнĕ формине тунă. Унта учителсене ĕçукçи парасси мĕнле пыни çинчен телеграфпа пĕлтермели отчот, нумай ачалă ача амăшĕсене учота илсе пырассин результачĕсем тата нумай ачалă пирки пособи панă чухне мĕн чухлĕ укçан тӳлевн çинчен тăратмали отчот, нумай ачалисене государствă пособине парасси мĕнле пыни çинчен телеграфпа пĕлтермели отчот, тĕштырăсене çапассин итогĕсем çинчен суртсем тăрăх тăратас отчот, лартмали çĕрулмийе аппробаци тăвасси çинчен тăратас отчот формисене тата пĕрлештернĕ хуçалăхсен тупăшран илнĕ налогсен тӳлевĕсене предприйатисенче тĕрĕслесси мĕнле пыни çинчен тăратас сведĕни формине кĕртнĕ.

Пирĕн тăван çĕршыв çинчен калакан кĕнеке

Социалисăмла Совет Республикĕсен Сойузĕ аслă та пултарулă. Унăн талкишĕ куçпа пăхса çитерейми сарлака. Унăн пуйанлăхĕ нихçан пĕтми нумай. Унăн халăхĕсен пултарулăх вăйĕсем хăватлă. Унăн хуçалăхпа çар хăвачĕ никам çĕнтерейми вăйлă та пысăк.—çапла пуçланат ПĈК(б) Парти Тĕпкомĕн Парти издателстви А. Стецки, Е. Ингулов тата Н. Баранов редакцилленипе кăларнă пирĕн чаплă тăван çĕршыв, социалисăм çĕнтернĕ çĕршыв çинчен калакан „На Родине" йатлă кĕнеке.

Кĕнеке пирĕн çĕршывра совет влаçĕ пулнăранпа 20 çул хушшинче пулса иртнĕ пысăк улшăнусем çинчен питĕ тĕлĕнмеле тата пуйан чăн материалпа кăтартса парат.

Кĕнеке тиражĕ тăватă мĕлйун. Хакĕ 85 пус.

Китай халăхĕн Йапони захватникĕсене хирĕç кĕрешес ĕçне хĕрарăмсем те активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Китай хĕрарăмĕсем-боецсем баррикадă патĕнче.

(Сойузфото)

Тăхăр державă конференцине пухаççĕ

БРӲССЕЛЬ, октаберĕн 12-мĕш (ТАСС) Англипе Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсем белги правителствине Бельги столицинче Брӳссельре тăхăр державă конференцине пухма шутлави çинчен пĕлтернĕ. Бельги правителстви ку конференцийе пухассипе килĕшнĕ.

* * *

1922 çулта Вашингтонра (Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсем) тăхăр державă (Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсем, Англи, Франци, Йапони, Китай, Бельги, Итали, Нидерландă тата Португали) конференцинче Китайа никама пăхăнмала мар тума тата çĕрпе пĕтĕмĕшле хăварма май паракан догăвăра алă пуснă. Ку догăвăр Китайăн пĕтĕм районсенчи йутпатшалăх фабриксемпе завод хуçисен танлăхне, йе уçă алăксен принципне çирĕплетнĕ.

Йапони Манчжурире 1931—32 çулта оккупаци туни тата кăçал Китайра интервенци туни—тăхăр державă догăварĕ çукки патнех илсе пырат.

Нумай пулмаст пĕтнĕ Лига наци Пленумĕ Китайра Йапони агресси тăват тата Йапони тăхăр державăн догăварĕ тăрăх панă обйазателствăна пăсат, тесе шутларĕ. Пленум çав догăвăра алă пуснă государствăсене, кирлĕ ĕçсене сӳтсе йавма канашлу пухма сĕнчĕ.

Вашингтонра тунă догăвăра пăснă пирки Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсемпе Англи халĕ тăхăр державă конференцине пухассине пуçаракансем пулса тăраççĕ.

(ТАСС).

Октаберти Аслă Социалисăмла револьуци çирĕм çул тултарнине уйавлама йутпатшалăхсенче хатĕрленни

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи рабочисем тата ытти общĕствăлă организацисем Аслă социалисăмла револьуци çирĕм çул тултарнă уйав йачĕпе пухусем, выставкăсем, Демонстрацисем, хавалă ӳревсем тата театрсенче спектакльсем организацилеççĕ. Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи коммунисла парти Октабĕр револьуци çирĕм çул тултарнине уйавланă кун пĕтĕм çĕршывĕпех пухусемпе митингсем организацилет. „Совет Сойузĕн тусĕсен" общĕстви Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче „Золотая книга американской дружбы к Советскому Союзу" йатлă кĕнеке çине пĕр мĕлйун çынна алă пустарассипе кампани туса иртерет. Ку кĕнекене Америкă делегацийĕ Совет Сойузне парне вырăнне парат.

* * *

Мадридри Аслă социалисăмла револьуци çирĕм çул тултарнине уйавласа иртерме тунă комитет тĕрлĕ организацисем уйава ирттерме хатĕрленни çинчен нумай çырусемпе пĕлтерӳсем илет. Мадридра Мадрид халăхĕ социалисăмла Совет Республикĕсен Сойузĕн халăхĕсем валльи йаракан парнесен выставкине организацилеççĕ.

(ТАСС).

Римра фашисăма хирĕçлисене суд туни

Францин „Се суар" хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, октаберĕн 12-мĕшĕнче Римра Милан хулинчи йуриссен, художниксен, вĕренӳçĕсен тата писателсен ушкăнне суд тума пуçланă. Вĕсене Италин Испанири интервенцине хирĕç пропагандă тунăшăн айапласçĕ.

Суд уйрăм трибуналра хупă çĕрте пулса иртет.

(ТАСС).

Икĕ шахмăт матчĕ

ССР Сойузĕнче малти вырăна тухассишĕн

Октаберĕн 13-мĕшĕнче ССР Сойузĕнче малти вырăна тухассишĕн Ботвинникпа Левенфиш хушшинче пыракан шахмăт матчĕн пилĕккĕмĕш партийĕ пулса иртнĕ.

Пилĕккĕмĕш парти шуррисен (Левенфиш) 34-мĕш хочĕ хыççăн никам та çĕнтерменнипе пĕтнĕ.

Матч 2:1 шутпа Левенфиш çĕнтернипе пырат.

Улттăмĕш парти октаберĕн 16-мĕшĕнче пулат.

Пĕтĕм тĕнчере малти вырăна тухассишĕн

Амстердамра октаберĕн 12-мĕшĕнче пĕтĕм тĕнчере малти вырăна тухассишĕн Алехинпа Ейве хушшинче пыракан шахмăт матчĕн тăваттăмĕш партийĕ пулса иртнĕ.

27-мĕш ходра парти никам та çĕнтерейменнипе пĕтнĕ.

Матч шучĕ 2:2. (ТАСС).

Чăваш АСС Республик Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн октаберĕн 10-шне кĕрхи çĕртме сухи тата силос хывасси мĕнле пынине кăтартакан

СВОДКИ

РАЙОНСЕМ	Кĕрхи çĕртме сухи планне тултарнă (процентпа)	Силос хывнă (процентпа)
Улатăр	56,5	16,1
Елĕк	27,4	34,7
Патăрйел	42,7	44,9
Вăрнар	55,1	24,6
Йĕпреç	45,7	25,0
Ишлей	55,3	23,3
Канаш	33,2	17,4
Куславкка	57,2	32,4
Кувакинă	90,4	18,6
Хĕрлĕ Чутай	40,1	4,5
Сĕнтĕрвăрри	54,9	33,6
Пăрачкав	43,4	16,7
Турхан	26,5	45,9
Тутаркас	60,9	30,9
Трак	46,7	23,5
Вăрмар	43,9	19,4
Çĕрпӳ	50,7	35,7
Шупашкар	71,2	27,1
Шăмăршă	26,7	18,1
Шăхасан	61,3	17,8
Шăнкăртам	71,0	39,3
Çĕмĕрле	32,2	15,7
Йетĕрне	63,0	29,4
Йелчĕк	50,5	20,7
Тăвай	42,4	37,4
ЧАССР-пе . . .	51,1	25,8

Малтанхи йур

Йулашки кунсенче ССР Сойузĕн Йевропă пайĕнчи çурçĕр районсенче çанталăк сисĕнмелех сивĕтнĕ. Октаберĕн 13-мĕшĕнче Мускавра малтанхи йур çунă. Çунă йур часах ирĕлсе пĕтнĕ. Çавнашкалах тата йур Смоленскра, Великий Лукра, Калининра, Курскра тата Ивановора çунă.

(ТАСС).

Тĕрĕсленĕ заметкăсем

„Ĕççĕр председател"

Тутаркас районĕнчи Кăбас йалсовет председателĕ Йандарайĕв йалсоветне йертсе пырас тата çĕнĕ суйлава хатĕрленес ĕçе манса кайса, ĕççĕр аптраса, пĕрмай ерех ĕçсе вăхăта иртерет. Колхозниксем уйра хĕрсе тырă вырнă вăхăтра, йалти найансемпе „ĕмĕлти бригадă" организацилесе ĕçкĕ-çикĕ туса иртернĕ, тесе çырат пĕр суйлавçă.

Ку заметкăна „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцийĕ Тутаркас райĕçтăвкомне тĕрĕслеме йанăччĕ.

Тĕрĕслесен Йандарайĕв çĕренкунĕн ĕçнипе йалсовет ĕçне йапăхтарса йани палăрнă. Йалсовечĕ районта кайри вырăна тăрса йулнă. Халĕ райĕçтăвком президиумĕ Йандарайĕва йалсовет председателĕнче хăварасси, хăварас марри çинчен йалсовет пленумĕнче ыйту лартмала тунă.

СУД

Хулигансем

Кăçалхи ийуль тата август уйăхĕсенче Шупашкарти, Автономи йачĕпе тăракан сатра хулиганла ĕçсем палăркаланă. Хулигансем сатра кайса çӳрекен çынсене хĕненĕ, електричĕствă лампиcене çӳнтернĕ т. ыт. Милици оргăнĕсем тĕрĕслесен, хăшпĕр хулигансене тытнă. Валентин Йаковлев, Борис Йурганов тата Павел Йемелйанов Шупашкар хушщинче час-часах хулиганла ĕçсем тунă. 1937 çулхи ийулĕн 27-мĕшĕнче сатра çав хулигансем кинотрестра ĕçлекен Вейланд йулташ çине тапăнса, ăна хĕнесе пĕтернĕ. Августăн 8-мĕшĕнче çав хулигансемех Романов гражданина тапăннă та, пуçран темиçе те çапнă. Августăн 9-мĕшĕнче Йургановпа Йемелйанов Шупашкар пристăнĕнче Сагинпа Шутникăв граждансем çине тапăннă. Милици чарма пырсан хулигансем милицине хирĕç тăнă. Августăн 14-мĕшĕнче çӳлте асăннă виçĕ хулиган сатра çутă сӳнтернĕ те, Лазаревпа Бельакова хĕненĕ т. ыт.

Октаберĕн 9-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи халăх сучĕ çав хулигансен ĕçне пăхса тухрĕ. Суд Йаковлева, Йурганова тата Йемелйанова кашнинех пиллĕкшер çуллăха хупса лартмала пригăвăр йышăнчĕ.

Мих. Полетайев.

ФУТБОЛ

Темпăвцăсем çĕнтерчĕç

Октаберĕн 12-мĕшĕнче футбол вăййипе Шупашкар хулинчи малти вырăна тухасшăн „Темп" тата „Спартак" общĕствисен пĕррĕмĕш командисем выльарĕç. Вăйăра темпăвцăсем Спартакăвцăсен алăкне пĕр меч кă кĕртсе çĕнтерчĕç.

Ответлă редактăр
П. И. ИВАНОВ.

Пĕлтерӳ

1937 ç октаберĕн 15-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре Колхозник çуртĕнче Шупашкарти пур учрежденисенчи, предприйатисенчи, ертелсенчи тата тĕрлĕрен шкулсенчи коллективсен Октабĕр уйавне ирттерме уйăрнă комиссийĕсен тата профсойуз комитечĕсен председателĕсен канашлăвĕ пулат. Кун йĕрки: „Пролетарилĕ Аслă револьуцин 20-мĕш çулхи уйавне хатĕрленесси çинчен".

Обйазателнă пымала.

ПĈК(б)П хула комитечĕ
Шупашкар хули совечĕ

ИЗВЕЩЕНИЕ

24 октября 1937 г. в 12 часов дня в помещении стройтреста созывается общее собрание членов РЖСКТ гор. Чебоксар с повесткой дня:

1. Положение о выборах в Верховный Совет СССР.
2. О ходе выполнения постановления общего собрания членов т-ва
3. Прием и исключение членов т-ва.
4. Довыборы правления РЖСКТ.

Правление Чеб. РЖСКТ.

„Сойузутилĕн"
Чăваш республикĕнчи кантурне
БУХГАЛТĔР КИРЛĔ
Ленин урамĕ, 3 №-лĕ çурт
„Çойузутиль"

ИККĔМĔШ ПЙАТИЛЕТКĂ
(ТĂВАТТĂМĔШ ÇУЛХИ КĂЛАРĂМ)
ЗАЙОМНЕ ÇЫРĂННИСЕНЕ

Иккĕмĕш пйатилеткă (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) зайомĕн облигацийĕсене ĕçленĕ вырăнта алла илейменнисене, предприйатисен тата учрежденисен бухгалтерийĕсем, çавнашкалах йалсовечĕсем перекет кассисене тавăрса панă. Вăл облигацисене илме çырăннă çынсем сумне çирĕплетмен.

Çавăнпа та зайом илме çырăннисем, вăл облигацисене хăйсен аллине иличчен, малали вырьавсенче шута кĕрейменсçĕ.

Иккĕмĕш пйатилеткă (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) зайомне илме çырăннă граждансем, облигацисене алла илейменнисем, хăйсем çырăннă тăрăх облигацисене районри перекет кассинче йе тĕп перекет кассинче илме пултараççĕ. Облигацисене алла илме рабочисем тата служащисем предприйати йе учреждени бухгалтеринчен зайомшăн мĕн чухлĕ тӳлев хывнине кăтартакан справкă илсе тăратмала. Колхозниксен тата уйрăм хуçалăхлă хресченсен зайом укçине хывнине кăтартакан расчот квитанцине тăратмала.

ИККĔМĔШ ПЙАТИЛЕТКĂ
(тăваттăмĕш çулхи кăларăм)
зайомне çырăнса илнисен облигацисене перекет кассинче алла илмели йулашки срок
—1938 ÇУЛХИ ИЙУНĔН 1-МĔШĔ

Государствă Перекет Кассисен тата Государствă Кивçенлĕхĕн Тĕп Управленийĕ.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 754. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашгиз. Заказ № 1923. Тираж 11564. ф. 58—92 см. 1—1 п. л.